33-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1942
МАРТ
15
ВЫРСАРНИКУН
62 (6087) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН
ХАÇАЧĔ.

Суракине хатĕрленес тĕлĕшпе пысăк тухăçлăхпа тата лайăх пахалăхпа ĕçленĕшĕн, ВКП(б) райкомĕсемпе ĕççынни депутачĕсен районсенчи Совечĕсен исполкомĕсем тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çаксене кĕртнĕ:

22. Михаил Васильевич Рылин—Кувакино МТС-ĕн трактор бригадин бригадирĕ. Рылин юлташ хăйĕн бригадинчи тракторсене, плугсене, сеялкăсене, культиваторсене январь уйăхĕнче срокченех юсаса пĕтернĕ тата ытти бригадăсене те тракторсем юсама пулăшнă. Хальхи вăхăтра Рылин юлташ тракторисчĕсен кадрĕсене хатĕрлет, вăл трактористсен курсĕнче вĕрентет.

23. Михаил Иванович Тилинин—Кувакино МТС-ĕн трактористĕ. Тилинин юлташ хăйĕн тракторне срокченех юсаса пĕтернĕ тата ытти трактористсене икĕ трактор юсама пулăшнă. Тилинин юлташ 4 курсантăна тракторсене юсама практикăллă ĕçре вĕренме пулăшнă тата вĕсене трактористка пулма вĕрентсе çитернĕ.

24. Пелагея Ефимовна Балденкова—Кувакино МТС-ĕн хĕрарăм-трактористкăсен бригадин бригадирĕ. Балденкова юлташ хăйĕн бригадинчи тракторсене, сеялкăсене, плугсене январь уйăхĕнче срокченех тата лайăх пахалăхпа юсаса пĕтернĕ.

Шкул çулне çитнĕ ачасене пурне те вĕрентессишĕн

Коммунистсен партийĕпе Совет Правительстви халăха çутта кăларас ĕçе питех те пысăк вырăн хурать. Пирĕн социализмлă тăван çĕршыври учреждениесем хушшинче совет шкулĕ хăйне тивĕçлĕ хисеплĕ вырăна йышăнса тăрать. Совет шкулĕшĕн, шкул ачисемшĕн, хамăр учителĕсемшĕн партипе правительство, пирĕн аслă çулпуç Сталин юлташ пысăк тăрăшать. Нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районсенче совет влаçĕ, халăха кирлĕ ытти учреждениесемпе пĕр танах, вăхăтлăха чарăнса ларнă шкулсен ĕçне çĕнĕрен чĕртсе ярать.

Отечественнăй вăрçăн йывăр условийĕсенче те пирĕн тăван çĕршывра шкулсем пĕр чарăнми ĕçлеççĕ. Шкул çулне çитнĕ ачасене пурне те вĕрентесси çинчен правительство йышăннă закон вăрçă вăхăтĕнче те пурнăçа кĕрсе пырать.

Республикăри нумай шкулсем, хăйсен ĕçне вăрçă вăхăтĕнчи майпа пек урăхлатса, вăрçă кăларса тăратнă йывăрлăхсене ăнăçлă çĕнтерсе пыраççĕ. Вĕсем вăрçă пула йывăрланса кĕрсе ÿкнĕ ачасене, урăх облаçсемпе республикăсенчен куçса килнисене, фронта кайнисен ачисене пулăшу парас ĕçе организацилеççĕ, шкул çумĕнче интернатсем уççĕ, шкултах вĕри апат хатĕрлесе çитереççĕ. Вĕсем вырăнти общество организацийĕсемпе, советсемпе, ачасен ашшĕ-амăшĕсемпе тачăн çыхăнса ĕçлеççĕ. Пăрачкаври тулли мар вăтам шкул кăçалхи вĕренÿ çулĕнче 27 ачана пĕрер костюм, 23 ачана пĕрер мăшăр ботинка панă. Илепейри вăтам шкул 11 ачана, Ишекри (Ишлей р.) вăтам шкул 9 ачана тумлантарнă. Çак шкулсемех ачасене вĕри апат çитерессине организациленĕ. Малăйри тулли мар вăтам шкул (Ишлей р.) урăх облаçсенчен килнĕ шкул ачисем валли ăшă япаласем пуçтарса, вĕсене 6 мăшăр алшăлçи, 4 мăшăр чăлха, икĕ çĕлĕк, пĕр кĕрепле çăм валеçсе панă. Йĕпреç районĕнчи Мăн Упакассинчи тулли мар вăтам шкул 20 ача валли интернат организациленĕ, буфет уçса панă.

Шкул çулне çитнисене пурне те вĕрентессишĕн чăннипе кĕрешсе, Ишлей районĕнчи Ишекри вăтам шкул, Хуçаçырмари, Катрасри пуçламăш шкулсем вăхăтлăха шкула пыраймасăр ачасене килĕрен çÿресе вĕрентес ĕçе пуçарса янă.

Анчах уйрăм районсемпе шкулсенче шкул çулне çитнисене пурне те вĕрентесси çинчен кăларнă закона пурнăçа кĕртсе çитермен. Ку тĕлĕшпе Улатăр, Пăрачкав, Çĕмĕрле, Сĕнтĕрвăрри районĕсем уйрăмах кая юлса пыраççĕ. Улатăр районĕнче пуçламăш классенче вĕренмелли 215 ача кăçал шкула пĕрре те пыман, вĕренÿ çулĕ пуçлансан пĕррремĕш çурçул хушшинче 1—IV-мĕш классенчен 229 ача, V—VII-мĕш классенчен 333 ача вĕренме пăрахнă. Пăрачкав районĕнче вĕренÿ çулĕн пĕррремĕш çурçулĕнче пĕр сăлтавсăрах 944 ача вĕренме пăрахнă. Çĕмĕрле районĕнче пуçламăш классенчен 9 процент ытларах, V—VII-мĕш классенчен 19 процент ытларах ним сăлтавсăрах вĕренме пăрахнă.

Çак районсенче шкул директорĕсем, класа ертсе пыракан учительсем тимсĕр ĕçлениине пула, ачасемпе вĕсен амăшĕсем хушшинче ăнлантару ĕçне çителĕклĕ сарманнине пула, уйрăм шкулсенчен сăлтавсăрах темиçе вуншар ача вĕренме пăрахнă.

Сĕнтĕр районĕнчи Кăнасри тулли мар вăтам шкултан 41 ача вĕренме пăрахнă. Шкул директорĕ Загольский юлташ пурне те вĕрентес закона пурнăçа кĕртме учительсен коллективне мобилизацилеймен, çу шкул коллективĕ вырăнти советпа, колхозсемпе, ачасен ашшĕ-амăшĕсемпе çыхăнса ĕçлемест.

Хăшпĕр шкулсенче, вырăнти советсенче, парторганизацисенче ĕçлекенсем ачасене шкула йĕркеллĕ, кун сиктермесĕр çÿретес тĕлĕшпе пачах çителĕксĕр ĕçлеççĕ, ачасем шкула çÿресси хăй тĕллĕнех пулса пырасса шанаççĕ. Çавна пула уйрăм шкулсенче шкула йĕркеллĕ çÿременнисен, занятисене час-часах сиктерсе пыракан ачасен хисепĕ чылаях пысăк. Сĕнтĕр районĕнчи Сятракассинчи тулли мар вăтам шкулта уроксенче вăтамран ачасен пĕтĕм хисепĕнчен 68 проценчĕ анчах пулать (директорĕ Смородинова), Кувакино районĕнчи Рындинари пуçламăш шкулта уроксене вĕренекенсен 73 проценчĕ анчах йĕркеллĕ çÿрет. Шăмăршă районĕнчи Çĕнĕ Чукальри шкулта вăтамран вĕренекенсен 36 проценчĕ урока çÿремест.

Ялти советсенче, колхоз правленийĕсенче, парторганизацисенче ĕçлекенсем вĕренекенсене шкула пĕр кун сиктермесĕр çÿремелле тăвас ĕçре шкулта ĕçлекенсене пулăшма тивĕç. Анчах хăшпĕр работниксем çавна ăнланса илмен-ха. Хăшпĕр работниксем, пурне те вĕрентесси çинчен кăларнă закона пурнăçа кĕртес ĕçре шкула пулăшу парас вырăнне, çу ĕçе чăрмантарса пыраççĕ. Сăмасран, Шупуç (Сĕнтĕр районĕ) ялсовет председателĕ Цветков, Тептей (Сĕнтĕр р.) ялсовет секретарĕ Коротков, Турн Пуç Шăхаль (Первомайски р.) колхозĕн председателĕ Герасимов, Туçа (Йĕпреç р.) ялсовет председателĕ Николаев юлташсем пурне те вĕрентес ĕçе пурнăçлама шкула пулăшас чухне хăйсен ачисене вĕренме ямасăр тăраççĕ.

Вĕренекенсем шкула йĕркеллĕ çÿресси ачасене шкулта ăнăçлă вĕренме условисем туса панинчен нумай калет. Анчах çак условисене туса парас тĕлĕшпе хăшпĕр ялти советсем, колхоз правленийĕсем нимех те тумаççĕ. Пăрачкав районĕнчи Семеновкăри вăтам шкула кăçал вутă çителĕклĕ тăратман пирки классене лайăх хутса ăшăтса тăман, юлашкинчен вутă пачах пĕтсе çитнипе шкул 4 кун хушши хупăнса ларнă. Ялсовет председателĕ Гусев, колхоз председателĕ Клубников шкула вăхăтра вутă турттарса кăларма пулăшман.

Отечественнăй вăрçăн йывăр условийĕсенче шкулсем йĕркеллĕ ĕçлемелле тăвасси, шкул çулне çитнисене пурне те вĕрентес закона пурнăçа кĕртесси вырăнти парторганизацисен, советсен, çутĕç оргăнĕсемпе шкулта ĕçлекенсен питех те ответлă задачи пулса тăрать. Вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсем çине йăвантарса, шкул ĕçĕнчи çитменлĕхсемпе килĕшсе тăни, вĕсем çине пÿрне витĕр пăхни пачах та пулма тивĕçлĕ мар. Пирĕн совет шкулĕ халăха çутта кăларас чаплă та хисеплĕ ĕçе туса тăрать, пирĕн вăтам шкулсем Хĕрлĕ Çар валли кирлĕ резервсене хатĕрлесе тăраççĕ, пирĕн шкулсенчен ялхуçалăх ĕçне тĕплĕн пĕлекен çынсем вĕренсе тухмалла. Çавăнпа та ĕнтĕ шкул çулне çитнисене пурне те вĕрентес ĕçе ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пымалла.

Пурне те вĕрентес ĕçе ăнăçлăн туса пырас тесен, шкула аякран çÿрекен ачасем валли интернатсем уçни, шкулта вĕри апат çитермелле туни, шкула вутă çителĕклĕ тăратни, ачасемпе ачасен ашшĕ-амăшĕсем хушшинче ăнлантару ĕçне анлăн сарни кирлĕ. Шкул ĕçĕ ăнса пытăр тесен, шкул коллективĕн вырăнти советсемпе, колхозсемпе, мĕншпур общественноçпа таччăн çыхăнса ĕçлени, шкулпа общественность, шкулпа çемье хушшинчи çыхăнăва çирĕплетсе пыни кирлĕ.

Шкул çулне çитнĕ ачасене пурне те вĕрентесси—закон, ăна никам та пăсма пултараймасть.

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнчи войскăсем 1942 çулти февралĕн 22-мĕшĕпе мартăн 10-мĕш хушшинче тытса илнĕ трофейăсем

Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнчи войскăсем февралĕн 22-мĕшĕпе мартăн 10-мĕш хушшинче противникран çакăн пек трофейăсем ТЫТСА ИЛНĔ: орудисем—157, танксем—20, минометсем—75, пулеметсем—329, танксене хирĕç пемелли пăшалсем—26, винтовкăсем—2.000 ытла, пĕр самолет, автомашинăсем—617, мотоциклсемпе велосипедсем—354, радиостанцисем—12, минăсем—5.000 ытла, снарядсем—6.000, гранатăсем—1.345, винтовка патронĕсем—1.500.000 штукăна яхăн, взрыв тумалли япаласем темиçе ещĕк, пĕр прожектор, парашютсем—109, йĕлтĕрсем—300 мăшăр, трактор-тягачсем—8, турттарса çÿремелли кухньăсем—8, лашасемпе лавсем—226, тимĕр пичкесем—300, бензин тултарнă битонсем—70, пĕр бензозаправщик, паровозсем—2, çар хатĕрсем тиенĕ чугунçул çинчи вагонсем—14, тĕрлĕ çар пурлăхĕсен склачĕсем—5 тата ытти çар пурлăхĕсемпе снаряженисем нумай тытса илнĕ.

Çак вăхăт хушшинчех нимĕçсене ПĔТЕРСЕ ТАКНĂ: самолетсем—91 (вĕсенчен виçĕ моторлă транспорт самолечĕсем—60), орудисем—67, минометсем—27, пулеметсем—150 ытла, танксем—14, груз тиенĕ чугунçул çинчи вагонсем—17, автомашинăсем—169, лавсем—78, складсем—18, вăл шутрах горючисен пĕр склачĕ тата боеприпассен склачĕсем—3.

Февралĕн 22-мĕшĕпе мартăн 10-мĕш хушшинче Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕн районĕнче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 14.000 çынран кая мар вилсе пĕтнĕ.

Нимĕç оккупанчĕсенчен халăх пурăнакан 84 пункта ирĕке кăларнă.

СОВИНФОРМБЮРО.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Мартăн 13-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Мартăн 13-мĕшĕнче пирĕн войскăсем, нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç çапăçса наступлени туса пырса, малалла куçнă. Фронтăн хăшпĕр участокĕсенче противник контратакăсем тума хăтланнă, анчах вăл контратакăсене тăшмана пысăк çухатусем кÿрсе сирсе пăрахнă.

Мартăн 12-мĕшĕнче нимĕçсен 24 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 7 самолет пĕтнĕ.

• • •

Мартăн 12-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 110 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 65 лавне, 39 орудине, зениткăллă пулеметсен 12 точкине, 23 минометне пĕтерсе тăкнă тата сиенленĕ, горючисен 2 складне тата боеприпассен 1 складне взрыв туса сирпĕнтернĕ, чугунçул çинчи 15 вагона çĕмĕрнĕ, противник пехотин икĕ батальонне сапаласа янă тата пĕр пайне вĕлерсе пĕтернĕ.

• • •

Иовлев юлташ командир пулса ертсе пыракан пирĕн часть (Хĕвеланăç фрончĕ) юлашки кунсенче халăх пурăнакан 11 пункта нимĕçсенчен тасатнă. Тăшман пысăк çухатусем тÿснĕ. Пирĕн часть тытса илнĕ трофейăсем хушшинче 3 çăмăл тата 12 грузовой автомашинăсем, 2 оруди, 3 пулемет, 1 трактор, 5 кухня, 20 километр тăршшĕ телефон кабелĕ тата ытти çар пурлăхĕсем пур. Тепĕр участокра пирĕн гвардейски часть нимĕçсен минометнăй батарейине, 4 орудине, 5 пулеметне тата çар грузĕсем тиенĕ темиçе лавне пĕтерсе тăкнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 100 виле ытла выртса юлнă.

• • •

Ленинград фронтĕнчи участоксенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн боецсем пĕр кун хушшинче тăшманăн 39 блиндажне землянкине çĕмĕрнĕ, нимĕçсен 8 танкне, 10 орудине, 3 минометне тата çар грузĕсем тиенĕ 3 автомашинине пĕтерсе тăкнă. Артиллеристсем персе, тăшман артиллерин 5 батарейине тата минометсен 6 батарейине пусарса лартнă тата пĕтерсе тăкнă. Çапăçу хирне противник 500 виле ытла, 3 оруди, 38 пулемет, 360 ещĕк патрон, 2.000 мина пăрахса хăварнă. Тыткăна илнисем пур.

• • •

Кăнтăр-Хĕвеланăç фронтĕнчи участоксенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн чаçсем, тăшман вăйлăн хирĕç тăнине сирсе пырса, халăх пурăнакан икĕ пункта йышăнса илнĕ. Нимĕçсенне 10 оруди, 5 миномет, 5 радиостанци, боеприпассен складне, винтовкăсемпе ытти кĕçĕн пăшалсем нумай тытса илнĕ. Ялсен урамĕсенче тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсен виллисем нумай выртса юлнă. Тыткăна илнисем пур. Тепĕр участокра пирĕн боецсем противникăн 250 салтакне тыткăна илнĕ. Тыткăна илнисем çапăçăва хайма килĕшменнишĕн нумай салтаксене офицерсем персе вĕлерни çинчен каласа панă.

• • •

Кащеев юлташ командир пулса ертсе пыракан часть (Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕ) тăшманăн гарнизонне аркатнă тата халăх пурăнакан пункта йышăнса илнĕ. Ял патне пымалли çулсем çинче тата урамсенче противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем 270 çын ытла вилсе юлнă. Пирĕн часть тĕрлĕ грузсем тиенĕ 50 автомашина, 150 велосипед, 12 мотоцикл, 4 оруди тата боеприпассемпе продовольствисен склачĕсене тытса илнĕ.

• • •

Пеньков юлташ командир пулса ертсе пыракан зениткăллă орудисен расчечĕ темиçе кун хушшинче нимĕçсен икĕ бомбардировщикне персе антарнă.

• • •

Ленинград облаçĕн нимĕçсем оккупациленĕ районĕсенчен пĕринче К. юлташ ертсе пынипе кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕçсен çар эшелонĕсем иртсе пынă вăхăтра чугунçула взрыв туса сирпĕнтерессине организациленĕ. Нимĕçсен танксем, артиллери тата войскăсем турттарса пыракан икĕ поезчĕ сирпĕнсе арканнă.

• • •

Нимĕçсен 17-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 55-мĕш полкăн 9-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ салтак Артур Фрункс çапла каласа панă: «Эпĕ Хĕвелтухăç фронтне 1942-мĕш çулти январь уйăхĕн вĕçĕнче çитрĕм. Фронтра пĕтĕмпе те 8 кун анчах пултăм. Çав вăхăтра пирĕн ротăри 48 çынран 30 çынни вилчĕ тата аманчĕ. Çакăн пек питĕ пысăк çухатусем пулнă пирки салтаксен шухăш-кăмăлĕ питĕ чакса кайрĕ. Пирĕн салтаксенчен чылайĕшĕ 30—40 çулсенчи тата çар ĕçне начар вĕрентнĕ çынсем. Тĕслĕхрен, мана винтовкăран пеме çеç вĕрентрĕç. Урăх йышши хĕçпăшала эпĕ тыткалама та пĕлместĕп. Эпĕ Российăна килнĕ эшелонра пурте çар предприятийĕсенче ĕçленĕ çынсемччĕ. Халĕ отсрочка памаççĕ. Çавăнпа та вĕсем фронта лекнĕ».

• • •

Çапăçу хирĕнчен пуçтарса илнĕ хутсем хушшинче нимĕçсен 123-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 415-мĕш полкри 3-мĕш батальон командирĕн обер-лейтенант Сиверсăн çырулĕ тупнă. Çак çырăва «СС» бригадин командирĕ Кристенсен патне çырнă. Сиверс хăйĕн çырăвĕнче çапла çырать: «Вырăссем хĕлле валли пирĕнтен лайăхрах та шанчăклăрах тумланнă. Вĕсен икĕ тĕслĕ тумтир: çуллахи тумтирсем тата хĕллехи. Походри йывăрлăхсене вĕсем пирĕнтен лайăхрах тÿсее ирттереççĕ. Командирсем хăюллă тата пысăк опытлă. Мĕнлеха пирĕн ĕçсем? Пирĕн ватă салтаксемпе офицерсенчен чылайĕшĕ тата кĕçĕн командирсем пĕтĕмпе тенĕ пекех çĕр çинче çук ĕнтĕ.

Вырăссем артиллерипе, танксемпе тата авиаципе пĕрле чăтма çук вирлĕн пырса çапаççĕ. Фронтăн тÿрĕ лини çук, пирĕн хирĕç тăмалли пунктсем яланах партизансемпе истребительнăй отрядсем пырса тапăнас хăрушлăхра тăраççĕ. Пирĕн питĕ пысăк çухатусем пулаççĕ. Аманнисене илсе кайма транспорт çук. Нимĕнле канăçлăх та, нимĕнле апат-çимĕç те çук. Çакăн пек ĕнтĕ пирĕн ĕçсем. Паллах, эпир ывăнса çитрĕмĕр, пыйтланса кайрăмăр. Пирĕн ÿтсене тасамарлăхпа витăнчĕç».

• • •

Харьков облаçĕнчи халĕ нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă Близнецы поселокĕнчи çынсем нимĕç захватчикĕсен тискер ĕçĕсем çинчен каласа параççĕ. Тивертсе ярса тата взрывсем туса поселокри пĕтĕм шкулсене, клубсене, библиотекăсене, почтăна, аптекăна, ача сачĕсемпе ача яслисене пĕтерсе тăкнă. Граждансем пушара сÿнтерме тытăнсанах, нимĕç автоматчикĕсем вĕсем çине пеме пуçланă. Гитлеровецсем поселокри пур çынсене те çаратса пĕтернĕ.

Мартăн 14-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Мартăн 14-мĕш ĕçран тенĕ чух çĕрле фронтăн чылай участокĕсенче совет войскисем, нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç çапăçса, наступлени туса пынă.

• • •

Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнчи участоксенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн чаçсем, противник вăйлăн хирĕç тăнине сирсе пăрахса, малалла куçнă тата халăх пурăнакан 6 пункта йышăнса илнĕ. Пирĕн чаçсем çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: танксене хирĕç пемелли 4 оруди, 5 миномет тата нумай ещĕк снарядсем. Нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 310 çын вилсе пĕтнĕ. Тепĕр участокра халăх пурăнакан 3 пунктшăн пынă çапăçура пирĕн йĕлтĕрçĕсен батальонĕ темиçе кун хушшинче 1.500 гитлеровеца çити вĕлерсе пĕтернĕ.

• • •

Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕн уйрăм участокĕсенче пирĕн чаçсем противника пысăк çухатусем кÿнĕ. Пĕр кун хушшинчи çапăçусенче тăшманăн 4 танк, инçете перекен 3 оруди, танксене хирĕç пемелли 8 оруди, 8 пулемет, 3 миномет пĕтерсе тăкнă, çĕрпе йывăççăран тунă 33 огневой точкăна çĕмĕрнĕ. Нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 1.500 çынран кая мар вилсе пĕтнĕ. Пирĕн чаçсем çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: 15 пулемет, 295 винтовка, 4 радиостанци, оруди, 2 миномет тата боеприпассем нумай.

• • •

Хĕвеланăç фронтĕнчи участоксенчен пĕринче пирĕн артиллеристсем, наступлени тăвакан пехотăна пулăшса пырса, пĕр кун хушшинче 4 ДЗОТ-а тата противник пехоти кĕрсе ларнă блиндажа аркатнă, çар грузĕсем тиенĕ 12 автомашинăна тата 15 лава пĕтерсе тăкнă.

• • •

Летчик кĕçĕн лейтенант Усенко сывлăшра нимĕçсен 3 самолетне тĕл пулнă та вĕсене хăюллăн атакăланă. Усенко юлташ «Ю—88» йышши 2 самолета персе çĕмĕрнĕ, тăшманăн виççĕмĕш самолечĕ вăшкасах тарнă.

• • •

Г. ялĕшĕн пынă çапăçура кĕçĕн лейтенант Николаев, красноармеецсен ушкăнĕпе пĕрле пулса, нимĕçсен 19 салтакне тыткăна илнĕ тата продовольствисем тиенĕ 3 лава тытса илнĕ.

• • •

Украинăн нимĕçсем оккупациленĕ районĕсенчен пĕринче Ч. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ хăюллăн кĕрешет. Юлашки кунсенче отряд, тăшман çине темиçе хут та ăнăçлăн пырса тапăнса, нимĕçсен вуншар салтакĕсене вĕлерсе пĕтернĕ. Партизансем противникран 2 оруди, 7 миномет, 3 ручной пулемет тата паха оперативнăй документсем тытса илнĕ. Нимĕçсен унтер-офицер партизансене тыткăна парăннă.

• • •

Нимĕçсен пехотин 3-мĕш моторизованнăй дивизийĕнчен тыткăна лекнĕ ефрейтор Антон Полингер çапла каласа панă: «Февралĕн 23-мĕшĕнче эпир Л. ялĕнче пултăмăр. Кĕтмен çĕртен вырăссен танкĕсем пырса тухрĕç. Унтер-офицер пурне те вырăнтах юлса танксене хирĕç тăма приказ пачĕ, анчах та ăна никам та итлемерĕ. Салтаксем пурте хам ăçта тарма пултарнă çавăнталла тарса пĕтрĕç. Мана тыткăна илчĕç».

• • •

Хĕрлĕ Çар пырса çитнипе Смоленск облаçĕнчи Калмански районран тухса кайнă чух нимĕçсен фашистла мерзавецĕсем 17-мĕш партсъезд ячĕпе тăракан колхозăн пĕтĕм çуртйĕрĕсене пĕтерсе тăкнă. Колхоз тата колхозниксем питĕ пысăк сиен курнă. Колхозниксен пĕтĕм пурлăхĕсемпе пĕрле 59 çурта, колхоз лашисен 4 витине, 22 амбара, тĕрлĕрен ялхуçалăх машинисене 62 машина çунтарса янă.

В. М. Молотов юлташ Р. Гарро господина йышăнни

Мартăн 13-мĕшĕнче Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов Ирĕклĕ (Франци) де Голль генерал ертсе пыракан Национальнăй Комитечĕн представительне Р. Гарро господина йышăннă.

Икерчелĕхĕн юлашки кунĕсенче тата хастарлăрах ĕçлер

Комсомолăн чылай пуçламăш организацийĕсем ыйтнипе, ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн бюровĕ мартăн 5—20-мĕш хушшинче колхозсенче вăрлăхсене тасатса сортлас тĕлĕшпе комсомолецсемпе çамрăксен икерчелĕхне туса ирттерме йышăннă.

Комсомолăн Красноармейски районĕнчи пуçламăш организацийĕсем çак икерчелĕхе пысăк хаваслăхпа тата çĕкленÿпе кĕрсе илчĕç. Икерчелĕхе мĕнле ирттересси çинчен малтан ВЛКСМ райком бюровĕн ларăвĕнче, унтан комсомолăн пуçламăш организацийĕсенче сÿтсе явнă. ВЛКСМ райкомĕ триерсем пур колхозсем çумне бюро тата пленум членĕсене çирĕплетрĕ. Вĕсем вара колхозсене кайса икерчелĕх пуçланас умĕн триерсемпе вăрлăхсене сортлама комсомолецсемпе çамрăксенчен уйрăм бригадăсем организацилерĕ. Районĕпе уйрăм пек бригадăсене 24 колхозра йĕркеленĕ. Икерчелĕх умĕн 7 триер çеç ĕçленĕ пулсан, икерчелĕхĕн малтанхи кунĕсенче 16 триера ĕçе янă. Комсомолецсемпе çамрăксен 24 бригади икерчелĕхĕн малтанхи пилĕк кунĕ хушшинче 4.887 центнер тĕштырă, 157,95 центнер пăрçа йышши тырăсене сортланă.

Комсомолăн «Трактор» колхозри пуçламăш организацийĕ (секретарĕ Павлов юлташ) организациленĕ комсомолецсемпе çамрăк хĕрачасен бригади пилĕк кун хушшинче 30 центнер сĕлĕ, 32 центнер тулă, 20 центнер пăрçа сортланă. 5 центнер урпана алăпа суйланă. «Красное Сормово» колхозра (секретарĕ Кириллова юлташ) 250 центнер, Войков ячĕпе тăракан колхозра—100 центнер, «Пятилетка» колхозра (секретарĕ Павлова юлташ) 200 центнер тырă сортланă.

«Свобода» колхозра хĕрачасенчен организациленĕ бригада 95 центнер сĕлĕ, 29,5 центнер урпа сортланă, 12 центнер пăрçана алăпа суйланă. Кунта уйрăмах А. Гордеева, М. Кириллова, К. Иванова, О. Гаврилова, Д. Кудрявцева юлташсем лайăх ĕçлерĕç.

«Красноармеец», «12 лет Октября» тата Калинин ячĕпе тăракан колхозсенче икерчелĕх пуçланиччен вăрлăх сортлас ĕçе пачах тытăнман пулнă. Икерчелĕх вăхăтĕнче çу колхозсенче комсомолецсем ятарласа бригадăсем организацилерĕç, вăрлăх сортлас тĕлĕшпе пысăк çитĕнÿсем турĕç. «Красноармеец» колхозра Васильева комсомолка организациленĕ бригада 4 кун хушшинче 45 центнер сĕлĕ, 12 центнер тулă тасатса сортланă.

Районĕпе мартăн 5-мĕшĕпе 10-мĕш кунĕсем хушшинче тĕштырăсене 6.822 центнер, пăрçа йышши культурăсене 291,95 центнер, вика вăрлăхне 216,75 центнер, кантăр вăррине 113,15 центнер, клевер—9,1 центнер сортланă.

Анчах та комсомолăн районри хăшпĕр пуçламăш организацийĕсем вăрлăх сортласа тасатас ĕçе кирлĕ пек хутшăнса ĕçлеймеççĕ-ха. Упи ялсовечĕнчи «Коминтерн» колхозри ВЛКСМ комитет секретарĕ Михайлова, «Партизан» колхозри ВЛКСМ комитет секретарĕ, ВЛКСМ райком пленумĕн членĕ Кузьмина юлташсем, икерчелĕх пуçланни 5 кун çитнĕ пулин те, ĕçе кирлĕ пек организацилеймен. «Коминтерн» колхозри триер халĕ те ĕçлемест. Кунта вăрлăха алăпа суйласа сортлассине те йĕркелемен.

Калас пулать, райçутĕç пайĕн заведующийĕ Прокопьев юлташ тата хăшпĕр шкулсен директорĕсен айăпĕпе пионерсемпе шкул ачисене вăрлăх сортласа тасатас тĕлĕшпе пыракан икерчелĕхе çителĕксĕр хутшăнтарнă-ха. Ямапакри, Çавал-Çырмари тулли мар вăтам, Мăн Шетмĕри вăтам шкулсенче вĕренекенсемсĕр пуçне, ытти шкулсенче вăрлăх сортлас тĕлĕшпе нимĕнех те тумаççĕ. Ямапакри тулли мар вăтам шкулта вĕренекенсем пилĕк кун хушшинче 3 центнер пăрçана алăпа суйланă, 20 центнер сĕлĕ, 5 центнер тулă, 2 центнер вика вăрлăхне машинăпа сортланă.

ВЛКСМ Чăваш Обком бюровĕ йышăннă тăрăх, мартăн 15-мĕшĕнче машина пайĕсене пухас тĕлĕшпе воскресник пулса иртет. Çав кун шкул ачисемпе пионерсен пурин те воскресника тухмалла. Хăшĕсем машина пайĕсем пухчăр, теприсем вăрлăхсене машинăпа сортлас е алăпа суйлас ĕçе хутшăнчăр.

Триерсене кунĕн-çĕрĕн ĕçлеттермелле тăвас тесе, комсомолецсемпе çамрăксен каçхине ĕçлекен бригадисене организацилемелле.

Комсомолецсемпе çамрăксем, пионерсемпе шкул ачисем! Икерчелĕхĕн малтанхи кунĕсенче пулнă çитменлĕхсене шута илер, юлашки кунсенче вăрлăха сортласа тасатас ĕçе активлăн хутшăнар, комсомолецсемпе çамрăксен бригадисене ытларах организацилер, пĕр-пĕрин хушшинчи ăмăртăва анлăн сарса ярар, триерсене пĕр секунт те ĕçсĕр лартар мар!

В. АРХИПОВ.
ВЛКСМ Красноармейски райкомĕн секретарĕ.

Мускав облаçĕнчи ялти комсомол организаци секретарĕсен канашлăвĕнче

М. И. Калинин юлташ тухса каланă сăмах

Юлташсем, сирĕн канашлу пĕр паллă тĕллев лартнă. Çакă вăл — суркуннехи уйхир ĕçĕсене мĕнле те пулин лайăхрах хатĕрленсе çитес, çуракине мĕнле те пулин лайăхрах ирттерес тĕлĕшпе пĕр-пĕрипе калаçса татăласси пулса тăрать. Çакна май комсомолецсем умĕнче питех те пысăк задачăсем тăраççĕ. Комсомолецсем ялта — пысăк вăй. Çак вăй организацилесен, комсомолăн колхозри организацийĕ хăйпе пĕрле çамрăксене кăна мар, çитĕннĕ колхозниксене те ертсе кайма пултарсан, вăл çуракине ирттерес ĕçре, паллах, çитĕнӳ тума пултарать.

Чăн та, çуракине хатĕрленес тата ăна ирттерес тĕлĕшпе комсомол кăна мар ĕçлет. Çак ĕçсемпе пуринпе те партипе совет организацийĕсем ĕçлеççĕ. Çапах та, çуракине ăнăçлăн ирттерес ĕçе питех те пысăк вырăна хурса, эпир мĕнпур общественноçа, çав шутрах комсомола та, мобилизацилесшĕн.

Çурхи ака ĕçĕсем тĕлĕшпе çакнашкал требованисене ĕнтĕ вăрçă вăхăчĕ лартать.

Пĕрремĕш тата чи пысăк ĕç вăл—акмалли çĕр лаптăкĕсене сарасси пулса тăрать. Пирĕн мĕнле те пулсан ытларах çĕр лаптăкне акса хăварма тăрăшмалла.

Мускав облаçĕнче халиччен сухаламасăр выртакан пушă çĕрсем ытлашши çук та темелле. Эпĕ Мускав çывăхĕнчи çĕрсене мĕнле те пулин ытларах акса хăвармалла тетĕп пулсассăн, çакă вăрçă вăл çураки планне пĕтĕмпех тултармаллине кирлине пĕлтерет. Çакăнпа пĕрлех, çуракине мĕн май килнĕ таранах кĕске сроксенче туса ирттермелле, кунсăр пуçне, çĕрĕн кашни ытлашшин лаптăкне, вăл ăçта пулсассăн та, хресчен хуçалăхĕн е колхозăн пахчи-и вăл, е станци таврашĕнчи участок-и,—ăна пĕтĕмпех акса хăвармалла. Пахчаран ирттерсе мĕнле те пулин ытларах акас тесе, пирĕн пур майсемпе те усă курмалла. Çав ирĕклĕ те ытлашши çĕрсене шута илес ĕçре комсомолецсен пысăк пулăшулăх кăтартмалла тата колхоз правленийĕпе пĕрле çав çĕрсемпе чăн-чăн хуçасем пек усă курас тĕлĕшпе малтанах шухăшласа пăхмалла. Мускав облаçĕ пирки каласассăн, кунта çĕрулми акмалли çĕр лаптăкĕсене ытларах сарассишĕн тăрăшмалла. Мускав облаçĕшĕн çĕрулми тĕп культура пулса тăрать, ăна ăçта май килнĕ, çавăнта лартма тăрăшмалла. Эпĕ сире тӳрех çапла калатăп: комсомолец-юлташсем, çĕрулми ытларах лартăр, ытларах, ытларах лартăр çĕрулмине! Паллах, пахча-çимĕç лартмалли çĕр лаптăкĕсене те аслăлатсах пымалла.

Кăçалхи суркуннехи ĕçсем мĕн пек паха вырăн йышăнса тăнине пĕтĕмĕшпех ăнланса илме тăрăшăр, юлташсем. Миллионшар çынсем, уйрăмах хĕрарăмсем хутшăнса ĕçлекен суркуннехи уйхир ĕçĕсен анлă процесĕнче комсомолецсен хăйсен çамрăк хастарлăхне кăтартса памалла, вĕсен çак ĕçе хăйсен çамрăк вăй-хăватне хумалла.

Ялта пулма пултаракан сӳрĕклĕхе татăклăн та хăюллăн сирсе пырăр, çуракине ăнăçлăн ирттерессишĕн мĕнпур майсене тупмалла, вĕсене комсомолла хастарлăхпа ĕçе кĕртĕр.

Комсомолăн колхозри организацийĕсен колхоз правленине, колхоз председательне суркуннехи уйхир ĕçĕсене пĕтĕм колхозниксене явăçтарас тĕлĕшпе, мĕншур туртăм вăйĕпе, мĕнпур ялхуçалăх инвентарĕпе усă курас ĕçре пулăшмалла. Çуракине халех пур те хатĕр пулни: инвентарьсене те юсаса çитерни, вăрлăхсене те хатĕрлесе çитерни, вулмелли таврашсене те юсаса хуни, çынсем хăйсем мĕнле участоксенче ĕçлессине те пĕлсе тăни питех те паха. Уйрăмах, юлташсем, çуракине ăнăçлăн ирттернĕ çĕрте мĕн кирлипе пуринпе те ытларах усă курма, çуракинче ĕç тухăçлăхне çӳле çĕклеме малтанхи кунсенчен пуçласах çине тăрса тăрăшăр.

Халĕ вăрçă пырать. Ялти халăхпурте нимĕçсене çапса аркатма ĕмĕтленеççĕ тесе калатăп пулсассăн, эпĕ йăнăш тумастăп.

Анчах ĕмĕтленни кăна вăл—сахал-ха, çакă вăл нимĕн те туманнипе пĕрех пулать. Нимĕçсене çапса аркатма ĕмĕтленетĕн пулсассăн, вĕсене сăмахпа мар, ĕçпе çапмалла. Çапла ĕнтĕ, Мускав облаçĕ пирки сăмах хускатсан, тӳрех çакна каламалла: нимĕçсен фашистла захватчикĕсене çĕнтерме çĕре эсĕ хутшăнас тетĕн пулсан, санăн мĕн май килнĕ таран ытларах çĕрулми лартмалла.

Паллах, хресчен хĕрарăмĕ сире çапла калама пултарĕ: мĕнле-ха вара эпĕ оккупантсене çĕрулми çапăп? — тейĕ. Кун пек шухăш-кăмăлсем вĕсем пулма пултараççĕ, акă халĕхи сирĕн, комсомолецсен, нимĕç оккупанчĕсене хирĕç кĕрешекен тата Хĕвеланăçĕнелле ăнăçлăн куçса пыракан Хĕрлĕ Çара, çакă питех те пысăк çара, лайăх тăрантарма, вăл мĕн ыйтнине пурне те парса тăма кирли çинчен колхозниксене ăнлантарса памалла та ĕнтĕ. Эсир хăвăрах ăнланатăр, çарти çын питех те пысăк йывăрлăхсемпе инкек-синкексем тӳсе ирттерет. Вăйн окопра ларать, кунĕн-çĕрĕн шартлама сивĕре çӳрет. Унăн вăй пултăр тесен, унăн ытларах хăват пултăр тесен, унăн алăнах çапăçас кăмăл пултăр тесен, унăн пысăк хастарлăх пултăр тесен, боеца тутă тытмалла, лайăх тăрантармалла. Сире нумайçĕ кун тăрантармасăр усрасан, унтан вара чупас тĕлĕшпе пурин те ăмăртăва тухмалла тесе пĕлтерсен е сире футболла вылямасăн сенсен, сирĕнтен кашниех çапла калĕ: эпĕ чупма пултараймастăп е манран футболист тухаймасть, тейĕ. Апла пулсан, боецсене тутă тытмалла, лайăх та тутлă çимĕçсемпе тăрантармалла. Пирĕн хамăрăн çарсене кирлĕ продуктсем тултин парса тăмалла. Пирĕн хамăрăн çарта талăха ытларах аш-какай памалла. Çĕрулми кысначсемшĕн лайăх апат-çимĕç пулса тăрать, эпир мĕн чухлĕ ытларах сыснасем тăрантарса самăртатпăр, пирĕн çарпа халăх çавăн чухлĕ ытларах аш-какай туянĕ.

Кăçалхи çуракине, вăрçă вăхăтĕнчи условисене кура, кăтартуллăн, чи кĕске сроксенче ирттермелле. Тырпула лайăх акса хăварса, пирĕн пысăк тухăçлă тырпул илмелли никĕсе хывмалла.

Апла пулсан, комсомолец-юлташсем, сирĕн çуракине лайăх ирттерессишĕн, чи малталах плана тултарассишĕн тата ытлашшин çĕрĕн кашни татăкĕпе туллин усă курассишĕн тăрăшмалла. Çакăн пек ĕнтĕ задача. Çак задача кашни совет гражданинĕшĕн закон пулса тăмалла, тесе калăттăм эпĕ. Çакă вăл, юлташсем, пĕрремĕш задача. Иккĕмĕш задача — чи пысăк тухăçлă тырпул туса илесси, çĕртен вăл мĕн пама пултарнине пĕтĕмпех илесси пулса тăрать. Çавăнпа та ĕнтĕ суркуннехи уйхир ĕçĕсен пахалăхĕ пире ăнăçлă тырпул туса илме май памалла. Çуракине ăнăçлăн ирттерсе пысăк тухăçлă тырпулăн никĕсне хывас тесе, сирĕн, комсомолец-юлташсем, хăвăр мĕн тума пултарнине вăй çитнĕ таран пĕтĕмпех тумалла. Çакна пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе мĕн тумалли çинчен эпĕ кунта каламăп. Эсир — колхозниксем, çакна эсир манран начар мар пĕлетĕр.

Çапла ĕнтĕ сирĕн умра икĕ тĕп задача тăрать: пĕрремĕшĕ — ытларах акса хăварасси, иккĕмĕшĕ — пуян тырпул пухса илесси. Çакăнта ĕнтĕ, юлташсем, эсир тăван çĕршывăн ĕçлени, эсир фронта пулăшни, фашизма хирĕç пыракан кĕрешĕве эсир чи ăнăçлăн хутшăнни курăнĕ.

Кунта чылай юлташсем çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе комсомолецсем питех те нумай ĕç туни çинчен, вĕсем колхозсене суркуннехи уйхир ĕçĕсене лайăх хатĕрлесе çитерме тăрăшни çинчен тухса каласрĕç. Çакă вăл питĕ аван. Çакăншăн пуриншĕн те мухтама тивĕçлĕ, анчах та эпĕ хăшпĕр комсомолецсем колхоз председателĕсем тăвас ĕçе пĕтĕмпех хăйсем çине илме пăхаççĕ пулĕ тесе шутлатăп.

Эсир çапла калатăр: пирĕн çав-çав ыйтăвсем çитмен, эпир çӳрерĕмĕр, тупрăмăр, уйăрттăмăр, тетĕр. Анчах мĕн тăвать-ха вара колхоз председателĕ? Мĕншĕн вăл, çакăна çинче аçăйса ларать-и мĕн? Пирĕн çапла тумалла: председательне ытларах ĕçлеттермелле. Сирĕн ĕç—пулăшасси, ĕçе хускатасси, çынсене канăç памасăр хускатса пырасси, пыл хурчĕ пек сăнăласси, çынна пыл хурчĕсем сăнăланă чухне çын вара хăвăртраххăн çаврăнкалать.

Мĕн пулĕ-ха вара вăл — эсир пĕтĕм ĕçе хăвăр алăпа туса пырсан, колхоз председателĕ ларса ирттерсен, — антив маншăн ыттисем туччăр, тейĕ вăл.

Комсомолец-юлташсем, эсир çакна асра тытăр: ертсе пырас ĕçĕн тата организаци ĕçне, агитаципе пропаганда ĕçне хутшăнассин икĕ меслет пур.

Пĕр меслечĕ вăл—ĕçе пĕтĕмпех хăвăн тăвасси. Çавнашкал комсомолецсем пур. Вĕсем пурне те хăйсен аллипе тăваççĕ: вулав çурчĕн пуçлăхĕ те вăл, вăлах пуху та пухать, докладсем те тăвать, колхоза çĕнĕ членсем илессишĕн те агитацилет, член укçисем те пухать. Пĕр сăмахпа каласан, пĕр çын пурне те тăвать, вăл—иртен пуçласа çĕрлеччченех ĕçре, унпа юнашарах пурăнакан ытти комсомолецсем çине нимĕнле ĕç те хумасть. Çакăн пек вăл пирĕн пулмалать; ĕç, чăнласа пĕтĕмĕшĕн малалла кайнă пекех туйăнать, анчах та эпĕ, юлташсем, çапла шутлатăп: организаторăн вăйĕ вăл — пурне те хăй тунинче мар палăрса тăмалла, унăн ыттисене те ĕçлеттермелле, хăй тыççăн вĕсене хавхалантарса пымалла. Калăпăр, эпĕ комсомолец тейĕпĕр,—паллах çакă вăл халь тин ĕнтĕ пулма пултараймасть (кулаççĕ),— эпĕ колхоза пынă пулăп, анчах эпĕ ниепле те мĕнпур ĕçе хам туман пулăттăм. Эпĕ пĕтĕм ĕçе вырăнти çынсем пулăшнипе тума тăрăшнă пулăттăм, антив кашнин задани пултăр, кашнин поручени пултăр, пĕр сăмахпа каласан, кашни ĕçлетĕр. Ку сахал-ха, пĕр-пĕр комсомолец комсомолра шутшăн кăна тăнине, вăл нимĕн ĕç те туманнине асăрхаса илес пулсан, эпĕ ăна час-часах ĕç хушса панă пулăттăм. Ырă пулса çакна ту, кăна ту, ăна ту, тенĕ пулăттăм, вăл мĕнле ĕçленине час-часах тĕрĕслесе пынă пулăттăм.

Çакăн пек кăна эпир ĕçре ăнăçу тума пултаратпăр. Эсир, юлташсем, ăнланса илĕр: çынсем нумайăн ĕçленĕ чухне, кашни çын мĕнле те пулин ĕç тунă чухне, комсомолăн пĕрлĕхлĕ ĕçне мĕнпур комсомолецсене валеçсе панă чухне, паллах, çакăн пек чух ĕç те лайăхрах пырать. Вунă çын мĕнле пулсан та, пĕр çын туниичен ытларах та, лайăхрах та тăвать.

Çамрăксене организацилĕх тĕлĕшпе идейăллăх никĕсĕ çинче кăна пĕтĕçтерме çук. Комсомола пур чухне те мар идейăллă пысăк ăнланупа кĕреççĕ. Паллах, пĕтĕмĕшпе илсен, çамрăксем комсомола идейăллă туртăмпа пулса комсомол партин пĕрремĕш тата чи çывăх помощникĕ пулса тăнине ăнланса кĕреççĕ, анчах та комсомола кĕрекенсем хушшинче идея тĕлĕшпе вăйсăртарах хатĕрленнĕ, комсомол ĕçĕн идейăллă содержанине тĕтреллĕрех ăнланакан çамрăк çынсем те пур. Çавăнпа та ĕнтĕ, комсомола кĕнисен çакнашкал пайне идейăллă, ăнланулла çынсем тăвас тесен, вĕсемпе нумай ĕçлемелле. Çынна комсомол йышне хăнăхтармалла, комсомол организацийĕ ун пурнăçĕн, йăлин пĕр пайĕ пулса тăтăр; çакăн пек тăвас тесен, ăна кунран кун мĕн те пулин ĕçлеттермелле. Практикăллă ĕçре çын çитĕнсе, вĕренсе, çирĕпленсе пырать, идея тĕлĕшпе ӳссе организатор пулса пырать. Çавăнпа та ĕнтĕ кашни комсомолецах практикăллă ĕçре ĕçлеттермелле, кулленех мĕн те пулин тутармалла, хăйĕн ĕçĕшĕн комсомол организаци умĕнче ответлă пулма вĕрентмелле. Коллективăн пĕр шухăш-кăмăллă ĕçĕнче кăна эпир лайăх организаторсем, лайăх работниксем пăхса çитĕнтерме пултаратпăр.

Мĕншĕн-ха вăл пирĕн колхозра часчасах çакăн пек пулать: лайăх колхоз председателĕ пулнă чухне колхоз вăйланса чечекленсе пынă; председатель кайнă, унта пĕр-пĕр сӳтĕк çынна лартнă та, тепĕр çултан колхоза пăлхамалла мар начар колхоз пулса тăрать. Çакă вăл колхозниксем хăйсем практикăллă ĕçе явăçман пирки кăна çавăн пек пулса пырать.

Çавăнпа та ĕнтĕ эсир, комсомолецсем, колхозра чăн-чăн организаторсем пулас тетĕр пулсан, сирĕн пулăшмалла кăна мар, пурне те хăвăрăн тума тăрăшмалла мар, сирĕн лайăх организаторсем пулмалла, бригадирăн ĕçне, колхоз председателĕн ĕçне, колхозникăн ĕçне сăнаса пымалла, вĕсене пулăшмалла. Колхоз производствинчи стахановецсене ырламалла, ĕçшĕн тăрăшман колхозниксене ятламалла, хăтăрмалла. Комсомолецсем колхозра администраторсем мар пулччăр, вĕсем колхозниксене обществăллă влияни парса пыччăр.

Администрацилĕ хĕтĕртӳпе обществăллă влияни хушшинче мĕнле уйрăмлăх пуррине эсир ăнланатăр. Калăпăр, эсир комсомолецсен усă пухăвне ирттернĕ. Унта, калăпăр, спекуляци тăвакан çынсене лайăх хăтăрнă, тейĕпĕр, çакă вăл обществăшăн питех те паха ĕç пулать: çав çын вăрçă вăхăтĕнчи обстановкăпа усă курса пасарта çĕрулмине виçĕ хакпа сутнăшăн эсир ăна намăслантаратăр, çав çынна обществăллă майсемпе юсама тăрăшатăр. Паллах, спекулянта юсамалли тепĕр май та пур—вăл административлă меслет, анчах кунта эпĕ çынна обществăллă майпа юсасси çинчен калатăп, çав май вăл çынна воспитани парас ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Хальхи вăхăтра колхозсенче пуринчен ытларах хĕрарăмсем ĕçлеççĕ. Комсомолец-юлташсем, сирĕн ĕç — çав хĕрарăмсене пурне те производствăллă ĕçе активлăн явăçтарасси, вĕсен патриотла пысăк туйăмĕсене хавхалантарса çĕклесси, вĕсене хăвăрпа пĕрле ертсе каясси пулса тăрать. Çак задачăна пурнăçа кĕртме пултарсан, комсомол организацийĕн ĕçĕ тата вăл массăсене влияни парса пыни питех те ăнăçлă пулнă пулĕччĕ.

Кăçалхи çуракине отлично ирттересси пирки, пысăк тухăçлă тырпул никĕсне хывса хăварасси пирки эпир сирĕнпе калаçса татăлтăмăр ĕнтĕ. Анчах та эсир çак задачăна чăннипех те çине тăрса татса парас тетĕр пулсан, сирĕн ĕçе хĕрарăмсене ытларах явăçтармалла. Çуракине ăнăçлăн ирттерниччен хамăрăн Хĕрлĕ Çара тата халăха продуктсем çителĕклĕн парса тăрас ĕç килнине сирĕн ĕнтĕ колхозницăсене тĕплĕн ăнлантарса памалла. Хамăрăн Хĕрлĕ Çара тата хамăрăн тыла продуктсем ытларах та лайăхрах парса пырассишĕн пирĕн мĕнпур хĕрарăмсем пĕтĕм вăйа хурса тăрăшнине эпĕ шанатăп. Сирĕн, комсомолецсен, çураки вăхăтĕнче уйхирте мĕнпур колхозниксем ĕçлеччĕр тесен, хăвăрăн ĕçе йĕркелемелле. Комсомолецсен ĕçне вĕсем хăйсем мĕн тума пултарнипе кăна мар виçмелле, вĕсем хăйсем хыççăн çамрăксене, мĕнпур колхозниксене, уйрăмах хĕрарăмсене хавхалантарса ертсе кайма пултарни тăрăх та виçмелле. Çакна яланах асра тытмалла: хĕрарăмсем — колхозра чи пысăк вăй пулса тăраççĕ, эпир уйхир ĕçĕсене мĕнпур хĕрарăмсене явăçтарсан, вĕсене патриотла пысăк туйăмпа хавхалантарсан, вĕсем питех те нумай ĕç тума пултараççĕ.

Комсомолецсем кахалсемпе ĕçсĕр аптăракансене хирĕç мĕнпур çамрăк хастарлăхпа кĕрешсе пырсан, вĕсене мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсем пулăшĕç тесе шухăшлатăп эпĕ. Уйрăмах вăрçă вăхăтĕнче, фронтра хаяр çапăçу сем пынă вăхăтра, хамăрăн çĕршывшăн, хамăрăн совет государствишĕн çапăçу хирĕнче кунсерен çĕршер çын вилнĕ вăхăтра ĕçсĕр лараканసене уйрăмах тӳсме çук. Эпĕ çапла шухăшлатăп, ĕçсĕр ларакансемпе харампырсене çирĕппĕн айăпласа ответ тыттарса пырсан, пире пĕтĕм халăх пулăшу парĕ.

Вăрçăн хаяр вăхăтĕнче, çапăçу уйхирĕнче тăван çĕршывăн кунçулĕ пирки ыйту татнă вăхăтра, тӳрĕ кăмăллă пĕр çын та кĕрешӳрен аякра тăма пултараймасть. Шухăшласа пăхăр-ха ĕнтĕ нимĕн тумасăр кулкаласа çӳрекен тата нимĕн тума та шухăшламан çын çинчен. Çавăн пек çын вăл — пирĕн тăшман. Комсомолецсен çавăн пек çынна намăс юпи çумне пăталаса хумалла, ăна пĕтĕм халăх умĕнче тăрă шыв çине кăлармалла. Вăл ниепле те тӳрленме пултараймасть пулсан, ăна хаяррăн айăпламалла. Акă ĕнтĕ мĕнле çул тытса пымалла сирĕн, комсомолец-юлташсем.

Комсомолецсен ĕçĕ пысăк та ответлă. Анчах та, юлташсем, пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар питĕ вăйлă противника, тĕнчере унпа никам та танлашма пултарайман противника çĕнтерсе пырать пулсан, пирĕн воинсем çав противника Хĕвеланăçнелле хăваласа, совет çĕрне фашистла ирсĕрсенчен тасатса пыраççĕ пулсан, эпĕ çапла шухăшлатăп: сирĕн çав боецсемпе — красноармеецсемпе, командирсемпе тата политработниксемпе юнашарах тăрас килекен пулĕ. Сирĕн ответлăхпа йывăрлăхран хăрама кирлĕ мар, сирĕн хăвăрăн ума лартнă задачăсене çĕнтерсе илсе пурнăçа кĕртмелле.

Пирĕн çакă питех те пысăк задачăсене çĕнтерсе илсе пурнăçа кĕртмелле тесе калатăп пулсан, çакă вăл лайăх та вăхăтра акса хăвармаллине пĕлтерет. Паллах, акса хăварма пулать, анчах та акана август уйăхне çити тăссан, çакăн пек акнинчен эсир нимĕнле тырпул та пухса илейместĕр. Çурхи вăхăтпа мĕнле пулин те ăнăçлăрах усă курса юлмалла, çуракине агрономи правилисем палăртнă срокссенче вĕçлемелле.

Лайăх акса хăварсан, лайăх тырпул пулать. Çакна тума пултарсан, пирĕн çĕршывăн тырпул та, çĕрулми те, пахча-çимĕçсем те пулаççĕ, халăха тăрантса пурăнма кирлĕ таран продуктсем пурте пулаççĕ. Эпĕ сирĕн пирки калатăп пулсассăн, эпĕ сире, комсомолецсене, кăна мар шута илетĕп, эсир организаторсем пулса тăрассине, хăвăрпа пĕрле аннӳсене, аппу-йăмăкусене, пиччӳсемпе шăллусене, асусене ертсе каяссине шута илетĕп, эсир хăвăрăн примерсемпе, уйхирте хăвăр лайăх ĕçлекипе ытти мĕнпур колхозниксене хавхалантарса пырассине шута илетĕп. Çаксене пурне те туса çитерсен тата эпир кĕркунне çĕнĕрен канашлăва пухăнсан, эпир кунта çапла калама пултарăпăр: эпир, комсомолецсем, хамăрăн сăмаха тӳрре кăлартăмăр, хамăрăн тăван çĕршыв умĕнчи тивĕçлĕхе пурнăçа кĕртрĕмĕр. (Нумайччен тăвăллăн алă çупаççĕ, пурте ура çине тăраççĕ).

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ (Кăнтăр-Хĕвеланăç фронтĕ). Фашистсенчен тасатнă ялсенчи халăх хăйсене хăтаракансене—Хĕрлĕ Çар боецĕсене пысăк хавасланса кĕтсе илет. Укерчĕк çинче: Н ялĕнчи колхозницăсем хăйсен ялне нимĕçсене çĕнтерсе хăвăл отрядăн лашисене шăварассĕ.

Е. КОПЫТА фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

Полкри парти бюровĕ

Комиссар хăç умĕн таврăнчĕ. Вăл темĕнле хавхаланулла. Землянкăна кĕриччен малтан вăл ыран пулмалли çапăçу хирне тĕплĕн тинкерсе пăхса çаврăннă. Хĕллехи кăç часах тĕттĕмленсе пуçларĕ, çавăнпа та тĕттĕмленнĕ пĕлĕтре полк ыран штурмлама хатĕрленекен высота тĕрри те аран кăна палăрса тăрать. Çапăçу пулмалли вырăна лайăх сăнаса тĕлмешкĕн штаб начальникĕпе пĕрле батальон комиссарĕ Флеровский те кайнă пулнă. Вĕсем нимĕçсен окопĕсем патĕнчех пулнă, хăвăт кăна тăшман автоматчикĕсем патне пырса тухман, çапах та вырăна вĕсем лайăх сăнанă, хăш тĕлте çырма, хăш тĕлте çӳллĕ вырăн пуррине тĕрĕс пĕлнĕ. Карттă вăл карттах. Анчах батальонсем ирĕ хирĕç каймалли вырăна хăй куçĕпе хăв сăнаса пĕлсен, вара чĕререн савăнатăн.

Лампа çывăхнерех ларса, комиссар тĕрлĕ карандашсемпе паллă туса тĕрĕслĕ карттăна сарса хучĕ те хăй патне парти бюровĕн секретарьне чĕнсе илчĕ. Пулас çапăçура тăшман çине вăл кĕтсе тăма та пултарман тĕлтен ăнсăртран пырса çапмалла. Планпа кăтартнă тăрăх, икĕ батальонăн пĕр сасăсăр высота патне çитмелле, тăшман минăсем лартнă вырăнтан иртсе, нимĕçсене флангсенчен пырса хыттăн хĕсмелле. Виççĕмĕш батальонăн тăшман çине тӳрех умран таланса кĕмелле. Артиллерирен пемелле мар. Тăшман çине пур енчен те штыксемпе тапăнса кĕмелле. Çавăнпа та коммунистсемпе комсомолецсем умĕнче çапăçăва лайăх хатĕрленсе ăнăçлă вĕçлес задача тăрать.

Парти бюровĕн ытти членĕсем те карттă патне пычĕç. Парти бюровĕн секретарĕ, старши политрук Вороненко, пухăва уçса, вĕсен командованин приказĕпе çапăçу мĕнле пулмалли çинчен ăнлантарса пачĕ. Штурм пуçланиччен вăхăт 5 сехет кăна юлнă. Парти бюровĕн ларăвĕ нимĕçсенчен пурĕ те 300 метрта çеç пухăнчĕ. Çавăнпа мĕнле пулсан та ларăва хăвăртрах туса ирттермелле. Кашни хăйĕн шухăшне каласа пачĕ, пурте пĕр шухăшлă пулса, ларăва мĕн тумаллине палăртса хучĕç те подразделенисем тăрăх саланчĕç.

Полка питĕ пысăк та йывăр задача панă. Çак задачăна кашни боецах тĕплĕн ăнланмалла. Парти бюровĕн членĕсемпе рота политрукĕсем тата агитаторсем пĕр окопран тепĕр окопа, боецсем пĕр ушкăнĕ патĕнчен тепĕр ушкăнĕ патне куçса, задача çинчен ăнлантараççĕ, полка ырри алăка валли хатĕрлеççĕ. Çак ответлă ĕçре бюро членĕсем питех те пысăк пулăшу параççĕ. Вĕсем пурте çар тĕлĕшпе нумай пĕлеççĕ, нумай хĕрӳ çапăçусенче пулса курнă, вĕсем, çавăнпа та вĕсен сăмахĕ—пĕлсе пинг сĕнӳ, вĕсен шухăшĕсем — авторитетлă шухăшсем пулса тăраççĕ.

Çĕрлехи вăхăтра пурте тăрăшсах ĕçлерĕç. Полк çутăличченех окопсенчен тухса пĕр сасăсăр малалла тапранса кайрĕ, кашни батальон хăйĕн çулĕпе пычĕ. Подразделенисем пуçĕнче командирпа тата политрукпа юнашарах парти бюровĕн членĕсем пычĕç. Çул çинчи кашни айлăмпа усă курса, боецсем пралук карса пĕтернĕ, минăсем лартса çирĕплетнĕ, окопсем чавса блиндажсем туса тултарнă высота патне хырăмсем çинче шуса пыраççĕ. Тăшман йышăнса тăракан ялти лашаре кашни минутăрах ракетăсем сутăлса тăраççĕ, вĕсем çутатнипе умри вырăнсем те уççăнах курăнса каяççĕ, çавăнпа та нимĕçсене ĕçсем пурте йĕркеллĕ пулса пынă пек туйăнать. Ракетăсем çутăлса кайнă вăхăтсенче боецсем пĕр хускалмасăр выртаççĕ. Тăшман патне çывхарса çитсенех, вĕсем пĕр çын пек урапа çине сиксе тăчĕç те тăшман çинелле штыкпа тапăнса кайрĕç. Тăшман калкăна лекнĕ тискер кайăк евĕрлех урса кайрĕ, вăл вăйлăн персе тăнипе çăлăнасшăн пулчĕ, анчах кая юлчĕ. Боецсем чăнкă вырăнсемпе çӳлелле хăпараççĕ, гранатăсемпе гитлеровецсен йăвисене аркатса пыраççĕ, фашистсене блиндажсенчен хăваласа кăлараççĕ. Пĕрремĕш батальона кăна йывăртарах пулчĕ. Высота çине хăпармалли вырăна тăшман калама çук хытă персе тăрать. Батальон командирĕпе комиссарĕ иккĕшĕ те пĕр вăхăтрах амантчĕç. Парти бюровĕн секретарĕ старши политрук Вороненко командованине хăй çине илчĕ. Вăл пулеметчиксене малашнехи çапăçу çинчен ăнлантарса пачĕ, унтан боецсем патне пычĕ. Вăл панă сигналпа тăрăх самантрах пулеметсем шатăртаттарма тытăнчĕç. Вороненко батальона атакăна ертсе кайрĕ. Нимĕçсем тӳсе тăраймарĕç, вĕсем каялла тарчĕç.

Полкри коммунистсем яланах пĕр йĕркене пăхăнса тăраççĕ. Кашни çапăçу хыççăнах вĕсем çапăçу мĕнле иртни çинчен парти пухăвĕнче сӳтсе яваççĕ. Çак пухусенче пая усăллă сĕнӳсемпе канашсем пулаççĕ, вăл сĕнӳсемпе канашсене часть командованийĕ те яланах шута илсе тăрать. Çапла майпа çарти çынсен çапăçури пĕлĕвĕпе мастерлăхĕ ӳссе пырать, çав хушăрах вĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсем те пĕтсех пыраççĕ.

Полкра хăш чухне йывăр вăхăтсем те килсе тухаççĕ, çав хушăрах тата пушă вăхăтсем те пулаççĕ. Парти бюровĕнче çакнашкал япала пулма пултараймасть. Парти ĕçĕнче пур вăхăта та тĕрĕс усă курмалла. Çавăнпа та полкри парти бюровĕ хăçан мĕн тумаллине, кама мĕн тутармаллине яланах лайăх пĕлсе тăрать. Кунта парти членĕн ятне питех çӳлĕ вырăна лартнă. Çавăнпа та партире тăман красноармеец хăйне партие илме ыйтса çырнă заявленине çирĕплетех сенсе ăрне памасть, ăна вăл малтан хăйĕн çумĕнче тытса çӳрет, çапăçура хăйĕн паттăрлăхне кăтартса параччен ăна вăл пули-пулми никама та кăтартмасть, хăйĕн паттăрлăхне кăтартсан тин вара чăнласах та эпĕ коммунист пулма тивĕçлĕ тесе шутласа илет.

Çапăçу вăхăтĕнче полкра сахал мар агитаторсем ӳссе çитрĕç. Окопсенче пушă вăхăт пулсанах боецсем Хĕрлĕ Çарăн çитĕнӳĕсем çинчен, тăшмана çĕмĕрсе тăвас тĕлĕшпе Украинăра тунă çитĕнӳсем çинчен, тĕнчери лару-тăру çинчен агитаторсем каласа панисене калленех итлесе лараççĕ.

Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче полкри парти организацийĕ ӳссе çирĕпленсех пычĕ. Нумай боецсемпе командирсене правительство Совет Союзĕн орденĕсемпе медалĕсене парса наградăларĕ. Награда илнĕ боецсемпе командирсенчен 70 проценчĕ коммунистсемпе комсомолецсем.

КРИВИЦКИЙ.

КАНТĂР ФРОНЧĔ. («Правда» хаçатран).

Связной Дементьев

Дементьев связной командир хăй патне чĕнтерчĕ.

— Мĕнле пулсан та çитермеллех, — терĕ вăл ăна икĕ пакет тыттарса.

— Мĕнле пулсан та çитермелле, — тавăрчĕ Дементьев.

Вăл пакетсене илсе шаларах тирпейлесе чикрĕ те урама тухрĕ.

Каç тĕттĕм те сулхăн. Юр вĕçтерхелет.

Связной хăйĕн «хурчăкине» — чылай çĕрте пулса чылай инкек-синкексене куркаланă мотоциклне кăларчĕ. Вара ĕçе ячĕ те çула тухрĕ.

Çил-тăман хассăн-кассăн вĕрет. Связной пĕрре мотор шавне, тепре çил вĕрнине итлесе пăхать, шанчăклăнах малалла тинкерет.

«Ахăртнех, илсе çитерет пулĕ-ха», — тет вăл, мотоциклне хытăрах чуптарма тăрăшса.

Анчах уй хапхинчен тухсанах çӳллĕ кĕртсем пуçланаççĕ. Çил Дементьева унталла та кунталла тĕкет, çул çинчен пăрса ярать.

Куçа уçса пăхма çук вăйлă тăман йăсăрланать. Мотоцикл урапись юр ăшне путса лараççĕ те пĕр вырăнта çаврăнма тытăнаççĕ.

«Çук, кунпа çитсе пулмасть», тет Дементьев.

Çул юппине çитсенех связной аяккалла пăрăнать те мотоцикл руль таранах кĕрт ăшне путса ларать. Машинăна ирĕксĕрех çывăхри подразделенине сĕтĕрсе кайма тивет. Кунта вăл мотоциклпа шинельне хăварать те тӳрремĕнех фронталла тухса утать.

Малта çĕрлехи çисĕм пек вут çутисем ялкăшаççĕ, пĕр чарăнмасăр канонада кĕрлет.

Унта — наступлени линийĕ.

Ак вăрман. Пăч тĕттĕм çĕр связной пилĕк таран кĕрт тăрăх ашать, йывăçсене пыра-пыра çапăнать. Пит-куç вут хыпнă пек пĕçерет. Пĕтĕм ӳт-тир тăрăх тар тумламĕсем юхаççĕ.

Пилĕк сехет хушши ĕнтĕ связной çанталăкпа кĕрешет. Шлемне пăçăрах аллине тытнă: пуç çинче вăл темле питĕ те йывăрланса кайнă пек туйăнма пуçларĕ.

Çăвар типсе ларсан Дементьев юр ывăçласа хыпать.

Шурăмпуç кăвакарма пуçласан малта ял курăнчĕ.

«Çитетĕп иккен», тет Дементьев савăнăçлăн.

Тăшман ял çине пĕр вĕçĕмсĕрех миномётсемпе тупăсенчен персе тăрать. Снарядсемпе минăсем урам хушшисене ӳке-ӳке çурăлаççĕ.

Çуртсене вут хыпса илнĕ.

Анчах ял пуш-пушах иккен: Хĕрлĕ Çар чаçĕсем малалла — хĕвеланăçнелле куçса кайнă. Связнойăн урисем хускатсан та хускаласшăн мар, тăхлан тултарнă пек хытса йывăрланса ларнă.

Каймалли — татах чылай километр.

Дементьев шăлне çыртать те урисем ыратнине пăхмасăр малалла утать. Çывăхрах снарядсем шăхăрса иртеççĕ, минăсем ӳке-ӳке çурăлаççĕ. Кĕртсем урлă ашса тухса, çуртсем тĕлне пыта-пыта тăрса, вăл çаплах малалла шăвать.

«Пакетсене мĕнле пулсан та кирлĕ çĕре çитермеллех», аса илет Дементьев командир приказне.

Çапла, хушнă ĕçе тумаллах.

Вăл шыракан часть тепĕр ялта тăрать иккен. Ку ял çине те тăшман пĕр чарăнмасăрах тупăсемпе пулеметсенчен, миномётсенчен персе тăрать. Связной командирăн пункчĕ шыраса тупать те пакетсене шăп кăна хушнă çынсене парать.

Каялла май Дементьев обозсем такăрлатнă çулпа таврăнать. Хăйĕн «хурчăкине» кĕрсе илсен питне çуса тасатать, унтан командир патне пырать те, сăмахсене касса татнă пек каласа рапорт парать.

— Командир юлташ! Эсир хушнă ĕçе турăм!

А. ОЗЕРСКИЙ.

(«Известия» хаçатран).

Фронтпа çĕршыв валли ытларах йывăç хатĕрлĕр

Вăрман хатĕрлевне пур вăйсене те мобилизацилемелле

Вăрман хатĕрлевĕнче тӳлевлĕ повинноçпа ĕçлеме Атăл тăрăхĕнчи вăрман промхозĕ çумне çирĕплетнĕ районсем вăрман ĕçне япăх хутшăнаççĕ. Районсенчи хăшпĕр руководительсем вăрман хатĕрлевĕ хальхи вăхăтра пысăк вырăн йышăнса тăнине шута илмеççĕ, плана тултарассишĕн тăрăшмаççĕ. Çавна пула Ишлей районĕнчи «Хĕрлĕ Ялăш», Ленин тата Тельман ячĕсемпе тăракан колхозсенчен, çавăн пекех «Малалла» колхозран та, мартăн малтанхи кунĕсенче вăрманта пĕр çын та ĕçлемен.

Çавнашкал япăх ĕçлекен колхозсем Сĕнтĕрвăрри районĕнче те пур. Сăмахран, Ольдикасси ялсоветне кĕрекен колхозсенчен те мартăн малтанхи кунĕсенче вăрманта пĕр çын та ĕçлемен. Юлашки кунсенче хăшпĕр районсенчи руководительсем вăрман хатĕрлев ĕçне çине тăрса васкатма тытăнчĕç. Етĕрне районĕнчи колхозсем мартăн 1—5-мĕш хушшинче 263 фестметр йывăç касса хатĕрлерĕç, 301 фестметр турттарчĕç. Ку районран мартăн 5-мĕшĕнче вăрманта 135 çын çуран, 74 çын лашапа ĕçленĕ, Шупашкар районĕнчен 115 çын çуран, 70 çын лашапа ĕçленĕ. Çавăн пекех ытти районсенчен те мартăн 5-мĕшĕнче вăрман хатĕрлевне чылай çынсем ĕçлеме тухнă. Çапла çав кун Атăл тăрăхĕнчи вăрманпромхозĕнче пурĕ 623 çын çуран, 372 çын лашапа ĕçленĕ.

Çуркунне çывхарса килет. Вăрманта ĕçлемелли вăхăт питех те сахал юлчĕ. Çак кĕске вăхăтра вăрман хатĕрлев планне тултарма пур вăйсене те мобилизацилемелле.

РАЙОНРИ ХАÇАТСЕН ВĂРМАН ХАТĔРЛЕВ ЫЙТĂВĔПЕ ЫТЛАРАХ ÇЫРМАЛЛА

Районри хаçатсен вăрман хатĕрлев планне вăхăтра пурнăçлас тĕлĕшпе вăйлă агитаторсем пулса тăмалла. Вĕсен вăрман хатĕрлевĕнче лайăх ĕçлекенсен опычĕсене çутатса памалла. Çавăн пекех вăрман хатĕрлев ĕçне йĕркеллĕ организацилемен пирки ĕç дисциплинине япăх тытакан, ĕç кунĕсене тулли усă курма пĕлмен çынсене критикăламалла. Анчах районри хаçатсем вăрман хатĕрлевĕ çинчен çитмелĕхсĕр çыраççĕ-ха. Сăмахран, Сĕнтĕр районĕнчи «Ĕç ялавĕ» хаçат юлашки уйăх çурăра 5-мĕш номертен пуçласа 18-мĕш номере çитиччен районри колхозниксемпе единоличниксем вăрман хатĕрлевĕнче мĕнле ĕçлени çинчен пĕр статья та пичетлесе кăлармарĕ.

Советски районĕн хаçачĕ «Совет ялавĕ» январьпе февраль уйăхĕсенче хăйĕн страницинче вăрман хатĕрлев ыйтăвĕпе икĕ умстатья тата пĕр замет ка пичетлесе кăларнă. Вăрман хатĕрлес ĕç çинчен час-часах çырма кирли пирки хаçат хăйĕн задачисене тĕрĕс ăнланса илнĕ. Хăйĕн умстатьинче: «Лайăх ĕçлекенсен примерĕсене анчах ĕçлекенсем палне çитерни кирлĕ. Çапла тусан ĕç тухăçлă пулĕ», тесе вĕрентет пулсан та, хăй лайăх ĕçлекенсен примерĕсене çутатса памасть. Вăрман хатĕрлевĕнче малта пыракан Хурамалăх, Сухра ялсоветĕсем çинчен пĕр-икĕ сăмах кăна çырнă. Малта пыракан ялсоветĕсемпе колхозсен, плана срокчен тултарассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлекенсен примерĕсене кăтартса ыттисене те вăрман ĕçне мобилизацилес тĕлĕшпе хаçат сахал ĕçлет.

Вăрнар районĕнчи «Социализм çулĕпе» хаçат 1-мĕш номертен пуçласа 13-мĕш номере çитиччен пĕр умстатья тата вăрманпромхоз директорĕн Г. Сайганов юлташăн статьине пичетлесе кăларнă. Ку статьяра вăрман ĕçне лайăх организацилемен, ĕçри уйрăм стахановецсене кăтартса панă. Çавнашкал статьясем ытти çынсене те ĕçе мобилизацилеççĕ. Çавăн пек статьясене час-часах пичетлемелле.

«Социализм çулĕпе» хаçат февралĕн 11-мĕш кунĕнче тухнă умстатьяра малтанах вăрманта лайăх ĕçлекен тепĕр колхозăн ĕçне кăтартса панă. Çакă вăл Кĕçтемĕрти Крупская ячĕпе тăракан колхоз. Ку колхозран вăрманта 40 çын çуран, 10 çын лашапа ĕçлеççĕ. Анчах, лайăх ĕçлекенсене кăтартнипе пĕрлех, хаçатсенче юлса пыракан колхозсене те малта пыракансемпе танлашма кирли çинчен астутарса хăвармалла.

Вăрманта ĕçлемелли вăхăт нумай юлмарĕ. Районри хаçатсем çак ĕçе [illegible] ытларах та çинерех çырмалла.

В. ИГНАТЬЕВ.

Депутат çыравĕпе суйлавçăсен отвечĕ

Вăхăт сахăр иртет. Тул çутĕлсе çитеймен-ха. Шĕмер ялсовет исполкомĕн председателĕ А. Андреев юлташ хăйĕн кабинетĕнче радио итлесе ларать. Ун [illegible]

Эпĕ халĕ Хĕрлĕ Çар ретĕнче юратнă тăван çĕршыва хамăн пурнăçа шеллемесĕр хӳтĕлетĕп. Кунта та эпĕ хамăн задачăсене чыслăн пурнăçласа пыма [illegible]

Г. ЛИВАШ.

Вăрçă вăхăтĕнчи налога тӳлесçĕ

ЭЛЕК. Хирлеппуç ялсовечĕ (председателĕ Т. Михайлова, налог агенчĕ М. Алексеев юлташсем) 1-мĕш кварталти финанс планне тултарас енĕпе районра 2-мĕш вырăнта тăрать. Комсомолецсем политикăллă агитаци ĕçне йĕркеллĕ туса пынипе пула колхозниксемпе колхозницăсем государство умĕнчи обязательствăсене срокчен татаççĕ. Хальхи вăхăтра вĕсем вăрçă вăхăтĕнчи налога та срокченех тӳлесе татма тăрăшаççĕ. «Красный Октябрь» колхоз членĕсем — В. Семенов, М. Порошков, И. Кузьмин, А. Алексеев, П. Иванова, «Заветы Ильича» колхоз членĕсем — Н. Васильев, Г. Федоров, М. Романов, [illegible] колхоз членĕсем — Е. Терентьев [illegible] вăрçă вăхăтĕнчи налога хăйсен семйисем тӳлесе татрĕç те ĕнтĕ. Вĕсем культсборпа самообложени укçисене те тӳленĕ.

Вăрçă вăхăтĕнчи налога срокчен тӳлесе татасси малалла та сарăлсах пырать. Кашни совет ĕççынни халь фронта пулăшас шухăш-кăмăлпа пурăнать.

М. КУСТИКОВ.

Оборона фондне тырă параççĕ

Сĕнтĕрвăрринчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз оборона фондне 648 килограмм тĕштырă, 134 килограмм ашкакай, 10 килограмм çăм панă. Çавăн пекех «Красноармеец» колхоз 33 килограмм тырă панă.

Новинскери Сталин ячĕпе тăракан колхоз çĕршыв оборонин фондне 600 килограмм тырă, 252 килограмм ашкакай панă, колхозниксемпе колхозницăсем укçа параççĕ.

А. РАЗИН.

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ (Кăнтăр фрончĕ). Унерчĕн çинче: Н-ски Гвардейски стрелковăй дивизи командирĕ Совет Союзĕ Геройĕ генерал-майор Шепетов (сулахайра) тата дивизи комиссарĕ полковой комиссар Сабадашевский наблюдательнăй пунктра.

М. АЛЬПЕРТ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Хĕрлĕ Çар валли шанчăклă резервсем

Оборонăн Государственнăй Комитечĕ пурне те çар ĕçне вĕрентесси çинчен йышăннă постановлени Хĕрлĕ Çар валли çирĕп те шанчăклă резерв хатĕрлес тĕлĕшпе калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çавăнпа ĕнтĕ пирĕн ĕçхалăхĕ ĕççыннисем вăл постановление пысăк çĕкленӳпе кĕтсе илсе, ăна пурнăçа кĕртсе пыма тытăнчĕç.

Çар ĕçне вĕрентес тĕлĕшпе пирĕн районра подразделенисем организациленĕ. Çав подразделенисенче рабочисемпе служащисем тата колхозниксем темиçе уйăх хушши çар ĕçне вĕренчĕç. Вĕсем занятисене йĕркеллĕ çӳресе, кĕске вăхăт хушшинчех винтовкăран, пулеметран пеме, танксене хирĕç кĕрешме, тăшмана хирĕç наступленине кайма, маскировка тума тата ыттисене те вĕренсе çитрĕç. Çакă вăл февраль уйăхĕнче пулса иртнĕ смотр тата 110 сехетлĕ программăна вĕренсе пĕтернĕ кăтарса пулса иртнĕ тĕрĕслӳре лайăх курăнчĕ.

Мартăн 1-мĕшне чылай подразделенисенче всевобуч боецĕсем 110 сехетлĕ программа тăрăх çар ĕçне вĕренсе тухрĕç. Ку тĕлĕшпе уйрăмах Осоавиахимăн райсоветĕ çумĕнчи подразделени мала тухрĕ. Кунта çар ĕçне вуншар çын лайăх вĕренсе тухрĕç. Вĕсенчен тылайĕшĕсем тĕрĕслӳре «отлично» тата «хорошо» паллăсем илчĕç. Çапла, сăмахран, коммунист М. Грачев, П. Савельев, Ф. Бочкарев юлташсем пур дисциплинăпа та отлично вĕренсе тухрĕç.

Çакă ĕнтĕ ĕççыннисем çар ĕçне епле тăрăшса вĕреннине, вĕсем тăшмана хирĕç тухма хатĕрленнине уçăмлăх кăтартса парать.

Комбинатри всевобуч подразделенийĕнче те çар ĕçне вĕренес енĕпе результатсем япăх мар. Кунта çар ĕçне темиçе çын вĕренсе тухрĕç. Вĕсем хушшинче «отлично» тата «хорошо» паллă илнисем сахал мар. Сăмахран, стахановецсем И. Гунин, Зайцев, Алевозский юлташсем пултаруллă боецсем пулса тухрĕç. Комбинатри подразделенире ку таранччен çĕршер пулеметчик хатĕрленĕ.

Хальхи вăхăтра районра çар ĕçне вĕренме иккĕмĕш черетпе пуçласа пырать, вĕренекенсене учета илеççĕ, подразделенисем тăваççĕ тата ытти те. Çар ĕçне вĕренме пуçăннисем пурте халь занятисем пуçланасса кĕтеççĕ. Вĕсем хăвăртрах çар техникине вĕренсе, тăшмана хирĕç çапăçăва тухма ĕмĕтленеççĕ.

А. СЕХОВ.

Çĕмĕрле райвоенкоматĕн всевобуч енĕпе ĕçлекен инструкторĕ.

Çар ĕçне тăрăшса вĕренеççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Мăн Шетмĕ ятам шкулĕнчи 8—9-мĕш классенче вĕренекен çамрăксем январĕн 1-мĕшĕнче всевобуч программи тăрăх çар ĕçне вĕренме тытăнчĕç. Подразделени командирĕ пулса вăтам шкулăн военрукĕ П. Софронов юлташ ĕçлет. Вăл çамрăксене çар ĕçне лайăх вĕрентет, кашни боеца дисциплинăллă, примерлă пулма тата тăван çĕршыва чĕререн юратма хăнăхтарать.

Вĕренӳре боецсем лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Малтанхи занятисенче винтовкăпа гранатăн пайĕсене вĕренчĕç, халĕ вĕсемпе боевой обстановкăра усă курма хăнăхса пыраççĕ. М. Петров, Д. Ильин боецсем винтовкăна 3 минута хушшинче салатса пуçтараççĕ. Огневой подготовка тĕлĕшпе те вĕренекенсем лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Кашни боецах винтовкăран тĕл пеме вĕренет. Нумайĕшĕсем 3-шар патронпа 28—30-шар очко илеççĕ. Пĕлтĕрпе çӳрессипе те кая юлмаççĕ. Нумаях пулмасть 10 километрлă дистанцие поход туса ирттерчĕç. Боецсенчен нумайĕшĕсем çак дистанцие 47—50 минутăра чупса тухрĕç.

Политрук И. Тихонов юлташ боецсем хушшинче политикăллă агитаци ĕçне лайăх туса пырать. Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене тăтăшах ăнлантарса парать, тĕнчери лару-тăрупа паллаштарать, партипе правительство руководителĕсен сăмахĕсемпе хаçатра пичетленекен статьясене вуласа пырать.

Вĕренӳ пунктĕнче подразделени командирĕсен уйрăм занятийĕсем пулса иртеççĕ. Çавăн пек занятисем тăтăшах пулса иртнĕ. М. ГЕРАСИМОВ.

Тăватă боецăн ашшĕ

Николай Васильевич 61 çула çитнĕ пуре çӳçлĕ старик. Анчах вăл хăйне пĕртте ватă çын тесе шутламасть. Вăл тылра ырми-канми ĕçлет.

Унăн тăватă ывăл. Асли — Александр çарта ветеринарнăй врач, Тимофей — артиллерист, Федор — политрук, тăваттăмĕшĕ — Михаил — связист пулса ĕçлет. Вĕсем пурте отечественнăй аслă вăрçăра Германи фашизмне хирĕç çапăçаççĕ.

Тăватă боецăн ашшĕ хăйĕн юратнă ывăлĕсенчен час-часах çырусем илсе тăрать. Унăн ывăлĕсем Хĕрлĕ Çара юрăхлă пулма пăхса ӳстернĕшĕн ашшĕне тав туса çыраççĕ.

Николай Васильевич Кивъял Шăматри «Ырăш» колхоз (Советски р.) членĕ.

— Эпĕ колхозра тăрăшса ĕçлесе фашистсене çапса салатма пулăшатăп. Ватă пулин те, çамрăксенчен юласа тăмп, — тет тăватă боецăн ашшĕ. Чăнах та вăл колхозра çамрăксемпе тан ĕçлет.

С. ФЕДОРОВ.

Çулпуç чĕнет! Тăван çĕршыв чĕнет!

Çапăçăва! Тăван çĕршывшăн! Тухăр
Çапăçăва! Юнлă тăшман çине!
Мĕнпур вăя, чĕре çиллине пухăр,
Çулпуç чĕнет! Тăван çĕршыв чĕнет!

Тĕнче тискерĕсем тапăнса килчĕç
Çутпа, хĕçпе пире чуралатма.
Вĕсем иртнĕ çĕрте кăмрăк та кĕл çеç.
Килнĕ вĕсем ишме те çаратма.

Тăшман иртнĕ çĕрте куççулĕ, хурлăх,
Айăпсăр юн, мăшкăл, чиксĕр асап.
Кирлĕ ăна пирĕн пуянлăх, пурлăх,
Вăл килнĕ мĕн пуян çĕр шыраса!

Анчах пиртен нихçан чура тăваймĕç,
Пирĕн пуянлăх пулмĕ нимĕçре.
Пирĕн ирĕк çынсем ăна пуç таймĕç,
Нихçан илеймĕ вăл пирĕн çĕре!

Çĕкленчĕ аслă ирĕк халăх йышĕ,
Тăшмана хирĕç вилĕмлĕ вăрçа.
Тăван çĕре килсе мăшкăл тунишĕн
Ытлашшипех вăл парĕ тавăрса!

Çĕнме çĕкленчĕ аслă Сталин çарĕ,
Вăл çапăçать шывра, çӳлте, çĕрте.
Çиçĕм пек çиллĕ, тăвăлла хаярĕ,
Ăна никам çĕнмн вăй-хал кĕртет.

Çуннă ялсемшĕн, ишнĕ хуласемшĕн,
Таптанăшăн тулăх уйхирсене;
Куççульпĕн, юншăн, вилнĕ тăвансемшĕн
Тăшман туянĕ ирсĕр вилĕмне!

Эпир пĕрне те, нимĕн те манмастпăр,
Юнĕçенсемшĕн пулмĕ каçару.
Çук, тавăрмасăр нимĕн хăвармастпăр,
Хаяр та тĕрĕс пулĕ тавăру!

Тăшман çӳрет-ха пирĕн çĕрсем тăрăх,
Халăх юнне ĕçсе, урса, асса.
Çĕршыв ывăлĕсем! Хӳме пек тăрăр,
Фашистсене çĕмрĕр персе, касса.

Вĕсене вилĕм çулĕпе ăсатăр,
Чĕррĕн ан тухчăр пирĕн çĕр çинчен.
Тăван çĕре ирсĕр муртан тасатăр,
Пĕтчĕр вĕсем пĕри те юлмиччен!

Шыраççĕ çĕр? — Туянччăр виçшер аршăн!
Юншăн? — Чыхланччăр ирсĕр юнĕпе!
Онĕçенсен мăшкăлĕ пулас маршăн
Эпир тăнă мĕльюн-мĕльюнĕпе.

Çапăçăва! Тăван Çĕршывшăн! Тухăр
Çапăçăва! Юнлă тăшман çине!
Мĕнпур вăя, чĕре çиллине пухăр!
Çулпуç чĕнет! Тăван çĕршыв чĕнет!

УЙАП МИШШИ.

Майракаллă шултра выльăхсемпе ялхуçалăх ĕçĕнче усă курасси

Сталин юлташăн историллĕ кăтартăвĕсене пурнăçлассишĕн пыракан кĕрешӳре — фронт валли ытларах та ытларах тырпул, какай, промышленность валли чĕртавар парас ĕçре çуракин тата тăкăр тапхăр пулса тăрать. Çуракине ăнăçлăн ирттерес тесен, колхозри пĕтĕм вăя пухас пулать, пĕтĕм материальнăй ресурссемпе усă курас пулать.

Çакна асрах тытса тăрас пулать: кăçал пирĕн çуркуннехи уйхир ĕçĕсем ĕлĕкхи çулхисенчен ытларах пулаççĕ, срокĕсем кĕскерех пулаççĕ, çав ĕçсене тума тракторсемпе лашасем пирĕн сахалтарах пулаççĕ. Çавăнпа та колхозсен тата районри çĕрĕç органĕсен руководителĕсен ĕçе ырана хăвармасăрах, халех хăйсен пĕтĕм туртăм вăйĕсене пăхса тухса, вĕсене çуракине хатĕрлеме тытăнмалла. Çак ĕçе тунă чухне майракаллă шултра выльăхсемпе ялхуçалăх ĕçĕнче анлăн усă курма кирли çинчен пĕр самантлăха та манас пулмасть. Чăваш республикинчи уйрăм колхозсемпе районсем çакна лайăх ăнланса илнĕ, вĕсем ĕнесемпе вăкăрсене çуракин хатĕрлеме тытăннă та ĕнтĕ. Сăмахран, Вăрнар районĕнчи «Волонтер» колхоз председателĕ Ефремов юлташ кӳлмелли хатĕрсем туса хатĕрлесе вăкăрсемпе ĕнесене ĕçе çӳреме хăнăхтарнă. Халĕ çав колхозра 3 вăкăр тата темиçе хĕсĕр ĕнене кӳлсе ĕçе тухаççĕ. Кувакино районĕнчи «Красный партизан» колхозра, майракаллă шултра выльăхсемпе ялхуçалăх ĕçĕнче анлăн усă курса 10 лашана колхозри вак тĕвек ĕçре кăтарса, вăрмана яма май тупнă. Чăваш республикинчи кашни колхозрах вăкăрсене, хĕсĕр тата сахал сĕт-çу паракан ĕнесене ĕçе кӳлме пултараççĕ, ăна çапла тума кирлĕ те.

Туртăм вăйĕ çуккипе çурхи ака планне тултараймарăмăр тени пулмалла мар. Халех, пĕр куна та сухатмасăр, ĕçе кӳлме юрăхлă кашни выльăх валлиех кӳлмелли хатĕрсем тума тытăнмалла. Ĕç валли палăртса хунă кашни майракаллă шултра выльăха уйрăм апат çитерсе мăнтăрлатма, вĕсене ĕçе кӳлсе хăнăхтарма тытăнмалла.

Кастарнă вăкăрсене, вĕсем 15—16 уйăх тултарнă пулсан, хĕсĕр е сахал сĕт-çу паракан ĕнесене ялхуçалăхĕнче тĕл пулакан ĕçсене пурне те тонĕ пек кӳлсе тухма пулать. Вĕсемпе шыв та, тислĕк те, вăрлăх та турттарма пулать, сухара-сӳрере те усă курма юрать. Анчах та чуптарнă ĕнесене, чупни 4—5 уйăх иртнĕ пулсан тата ĕни питĕ тухăçлă пулсан, вĕсене вăра кӳлме тивĕçлĕ мар. Аратлă вăкăрсене ĕçе кӳлме юрать, анчах та йывăр ĕçе мар, тата чуптару сезонне шута илес пулать.

Çакна асрах тытмалла: çуркуннехи уйхир ĕçĕсене тума уйăрса хунă вăкăрсемпе ĕнесене ĕçе тухиччен сахалтан та пĕр 4—6 эрне малтан хатĕрлеме тытăнас пулать. Çав вăхăтра вĕсене утă, сĕлĕ е çăнăх ытларах çитермелле. Ĕç ĕнисемпе вăкăрсем ĕçе тухас умĕн вăйлă та лайăх сывлăхлă пулмалла.

Майракаллă шултра выльăха хĕлле, тислĕк çул çинче, çунапа кӳлсе ĕçе хăнăхтарма лайăх. Выльăха ĕçе хăнăхтарма вăхăт ытла нумай кирлĕ мар, 5—6 кунрах вĕсем хăнăхаççĕ. Анчах та çак ответлă ĕçе тăвакан çын ĕçе мĕн вĕçне çитиех туса çитермелле, выльăх хăйĕн хуçине пăхăнтăр, итлетĕр, вăл мĕн тума хушнине ăнлантăр. Выльăха ĕçе вĕрентнĕ чухне малтанхи кунсенче йывăрлăхсем те тĕл пулĕç, анчах вĕсенчен хăрама кирлĕ мар.

Майракаллă шултра выльăхсене уйрăмăн-уйрăмăн мар, мăшăрăн кӳлсе ĕçлеттерме лайăхрах. Кӳлнĕ вылăхсем иккĕшĕ те пĕр пекрех, пĕр пек вăйлă, пĕр пек кăмăллăрах пулмалла.

Майракаллă выльăхсене мăшăрлă хăмăтпа е шоркăпа кӳлеççĕ. Шоркă тума йывăрах мар, вăл хакла та ларасть. Ăна пĕтĕмпех тенĕ пек йывăçран тăваççĕ (хурăнтан е йĕлмерен), кĕççе, сăран тавраш ĕçене хума та кирлĕ мар. Шал-нĕ тикĕс те яка пултăр, ӳт çумне лайăх çыпçăнса тăтăр, ан хыртăр, — çакна ĕç пуриччен ытла асăрхас пулать. Çавăнпа та кашни выльăх валли хăйне уйрăм шоркă тăваççĕ. Ĕçленĕ вăхăтра асăрхасах çӳремелле: выльăхăн майне, ăнсине хырмасть-и. Выльăхăн мĕн те пулсан ыратнине сиссенех, ĕçлеме чарăнса, çав ыраттаракан япалана сирсе пулать. Пуриччен ытла выльăхăн чĕрнине сыхлани кирлĕ. Майракаллă шултра выльăхсен чĕрнисем лашанни пек мар, вĕсене таканлама май çук. Ĕнесемпе вăкăрсен чĕрнисем çемçерех, вĕсем хăвăртрах ӳсеççĕ, часах катăлаççĕ. Çавăнпа та кашни уйăхрах икшер хутран кая мар вĕсен чĕрнисене касса лайăх тасатса ярас пулать.

Çуркуннехи уйхир ĕçне ĕçленĕ чухне выльăхсене вăхăтран вăхăта кантарса, сывлăш çавăрттарса илес пулать, 4—5 сехет ĕçленĕ хыççăн вăра апат парса чылаях кантармалла.

Икĕ вăкăр е икĕ хĕсĕр ĕне, вĕсемпе пĕлсе ĕçлесен, вĕсене лайăх пăхсан, сĕтеклĕ тутă апат çитерсен, ĕçре икĕ лаша тĕшне тăраççĕ.

В. СОЛОВЬЕВ.

Ялхуçалăх наукисен кандидатчĕ.

Выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ӳстерессишĕн тăрăшнă çĕрте

Тарăн çырмаран улăхакан такăр çул Аслă Туçа ялĕн вăрăм кассине пырса кĕрет. Вăрăм кас тăрăх малалла утсассăн чухне çырма енче «Память Ленина» колхозăн выльăх-чĕрлĕх витисем ларнине куратăн.

Телефон юписем тăрăх пыракан радио конюхсемпе фермăсенче ĕçлекенсем пурăнакан çуртсене кĕрет. Радио çак кĕтессе мĕнпур çĕршывпа çыхăнтарать. Колхозниксем ун тăрăх çĕнĕ хыпарсемпе паллашаççĕ.

Хăма карта тытса çавăрăннă выльăх картишĕ тасатнах сарăлса выртать. Урам енчи хапхаран кĕрсен, конюхсен пӳрчĕ курăнса ларать. Унта 14 конюх пурăнать.

Конюхсем пурăнакан пӳртрен 10—15 метртра лаша витисем. Сылтăм енчи витине йывăçран тунă. Ку витере ĕçре тисĕнĕ ватăрах лашасем тăраççĕ. Сулахай енче ларакан тăм сĕрсе тунă витере хĕллехи сивĕ кунсенче те ăшă пулать. Кунта çамрăк лашасем, ятарласа тунă пӳлĕмсенче — тихасем тăраççĕ.

Вите урайĕсем таса. Конюхсем картишĕнчи тислĕке тасатсах тăраççĕ. Пухăннă тислĕке çийĕнчех тислĕк усрамалли картиш тулашĕнчи вырăна турттараççĕ.

Конюхсем лашасене юратса пăхаççĕ. Вăхăтра апат параççĕ, вăхăтра шăвараççĕ, лайăх хылчăкласа тасатаççĕ. Илья Григорьев конюхра 4-мĕш çул ĕçлет. Ĕçре вăл çамрăк конюхсене вĕрентсе, пример кăтартса пырать.

Лаша витисенчен леререх, çырма тĕрнелле, ĕне, сурăх, сысна, чăх-чĕп, хур-кăвакал витисем сарăлса лараççĕ. Вĕсенчен инçе мар вут-кăвар сӳнтермелли хатĕрсем хунă сарай, выльăх апачĕсем усрамалли ӳпле, выльăхсен родильнăйĕ.

Сыснасен витине тăмран тунă. Витере сутă, ăшă, таса. Свинарьсем сыснисене лайăх пăхаççĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ иртнĕ çулта свинарь Павлов 5 амаран 70 çăвăр илсе çитĕнтернĕ. Çавăн пекех Мария Мясникова та 6 амаран 80 çăвăр, Николаева — кашни амаран 14-шар çăвăр илсе çитĕнтерчĕç.

Выльăх картишĕнче ĕçлекенсем тăрăшса, хăйсен ĕçĕсене юратса ĕçленине колхоза выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе мала тухма пулăшрĕ. Колхоз паянхи куна планпа пăхнă 135 сысна вырăнне 164 сысна усрать. Çавăн пекех ĕни, сурăх, хур-кăвакал ĕрчетес плансене те 100 процентпех тултарнă.

Выльăх картишĕнче ĕçлекенсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Выльăх-чĕрлĕхсене зоотехниксемпе ветеринарсем хушнă пек пăхаççĕ. Çамрăк выльăхсене çитĕнсе çитнисенчен уйрăм тытаççĕ. Витесенче ытлашши ăшă пулсан, уçса сивĕтеççĕ. Выльăх апачи улăмсене тасатса, улăштарсах тăраççĕ. Çитересе выльăхсене рацион тăрăх çитереççĕ.

Фермăсенче тăрăшса ĕçлекен колхозниксемпе колхозницăсем районри ытти колхозсенче те сахал мар. Иртнĕ çулта Кив Тутайкассинчи «Красный Октябрь» колхозăн свинарĕ Д. Диомидов юлташ ĕçшĕн хушса тӳлемелли йĕркепе — 5 çăвăр, Тимошенко ячĕпе тăракан колхозăн доярки — 50 литр сĕт, «Çуталла» колхозăн ферминчи сурăхсене пăхакан М. Ефремова — 900 грамм çăм, «Волгарь» колхозăн ферминчи чăх-чĕпе пăхакан З. Максимова — 35 çăмарта илчĕç. Районĕпе пурĕ, ĕçшĕн хушса тӳлемелли закон тăрăх, ялхуçалăх продукчĕсене натурăпа 122 çын илнĕ. Вăл шутран сĕт суса илес плана ирттерсе тултарнăшăн — 33 çынна, пăрусем пăхса çитĕнтерес енĕпе — 39 çынна, çăм илес енĕпе плана ирттерсе тултарнăшăн — 19 çынна хушса тӳленĕ. Ĕçкунĕ çумне хушса илекенсем уйрăмăнах «Красный Октябрь», «Волгарь», «Социализм», Калинин, Киров, Тимошенко ячĕсемпе тăракан колхозсенче нумай пулчĕç.

Вăхăт çуркунне еннелле кайнă май фермăсенче çамрăк выльăхсем хутшăнма пуçларĕç. Вăрçă вăхăтĕнче çамрăк выльăхсене пурне те тĕрĕс кĕтсе илсе йĕркеллĕ çитĕнтересси колхозсен хисеплĕ ĕçĕ пулса тăрать. Сĕнъял Пукашри «Правда» колхозăн доярки А. Ириткова юлташ пăрусем çитĕнтерес тĕлĕшпе пакла тĕслĕхсем кăтартать. Ириткова юлташ тапратса тултарнă ĕнесене уйрăм хупать. Пăрусене пĕчĕк ачасене пăхнă пек пăхать. Вĕретсе пĕçернĕ утă шывне сĕтпе хутăш ĕçтерет.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе районри пур колхозсем те мар-ха кирлĕ пек туса пыраççĕ. Сӳлти Улмалуйĕнчи «Авангард революции» колхоз председателĕ Индюков юлташ ĕне витине çур хĕлтен иртсен кăна ăшăтма тытăнчĕ. Чăх-чĕп витине кунта ăшăтмасăрах хĕл каçрĕç. Ферма заведующине Г. Артемьев юлташа выльăх-чĕрлĕхе йĕркеллĕ пăхманшăн ĕçрен хăтарнă. Çапах та выльăх-чĕрлĕхе пăхас ĕç лайăхланни сисĕнмест-ха.

Выльăх-чĕрлĕхе йĕркеллĕ пăхмасан, унăн продуктивноçĕ те ӳсме пултараймасть. Ахальтен мар ĕнтĕ иртнĕ çулта Анатри Улмалуйĕнчи «Красный танк» колхоз, вăтам шутпа, 100 ăна фермăсемпе те 54 пăру, пĕр амаран 11 çăвăр вырăнне 5 çăвăр çеç илсе çитĕнтернĕ.

Выльăх-чĕрлĕх колхозсене пысăк тупăш пани пуриншĕн те паллă. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе районри пур колхозсен те вăрçă вăхăчĕ ытти пек вăйлатмалла.

Г. ПЕТРОВ.

Нимӗҫ оккупанчӗсенчен ирӗке кӑларнӑ районсенчи ӗҫҫыннисене пулӑшар

Вӑрҫӑн малтанхи уйӑхӗсенче нимӗҫсем совет территоринчи хӑшпӗр районсене йышӑнчӗҫ. Халӗ Хӗрлӗ Ҫар нимӗҫсене ҫав районсенчен хӑвалаҫа кӑларать. Тӑшман ҫиллине пиҫта шӑнӑҫтараймасӑр туллашать. Тухса кайиччен тата ытларах сиен туса хӑварма тӑрӑшать. Нимӗҫсем пирӗн ялсене ҫунтараҫҫӗ, пӗчӗк ачасене, хӗрарӑмсене, ваттисене урама тӑратса хӑвараҫҫӗ, вӗсен япалисене туртса илсе тухса каяҫҫӗ. Ҫавӑнпа та пирӗн нимӗҫ оккупанчӗсенчен ирӗке кӑларнӑ районсенчи ӗҫҫыннисене пулӑшмалла. Комсомол организацийӗсен вӗсен ачисене пулӑшас тӗлӗшпе ӗҫлемелле.

Нимӗҫ оккупанчӗсенчен ирӗке кӑларнӑ районсенчи ӗҫҫыннисене, уйрӑмӑнах вӗсен ҫамрӑк ачисене пулӑшасси Ишлей районӗнче мӗнле пыни ҫинчен нумай пулмасть ВЛКСМ Обком бюровӗ сӳтсе-яврӗ. Ку ыйтупа ВЛКСМ Ишлей райкомӗн секретарӗ Н. Русанов юлташ каласа пачӗ.

Бюро комсомолӑн Ишлей районӗнчи организацийӗсем нимӗҫ оккупанчӗсенчен ирӗке кӑларнӑ ӗҫҫыннисене пулӑшас ӗҫе пуҫӑннине палӑртрӗ. Ҫавӑнпа пӗрлех бюро ӗҫри пысӑк ҫитменлӗхсене кӑтартса хӑварчӗ.

Ирӗке кӑларнӑ районсенчи ӗҫҫыннисем валли япаласем пухассине Ишлей районӗнчи ВЛКСМ организацийӗсем колхозниксем хушшинчи политикӑллӑ-массӑллӑ ӗҫпе ҫыхӑнтарман. Ҫавӑнпа ку ӗҫе районри комсомолецсемпе шкул ачисем кӑна хутшӑннӑ. Вӗсем тарелка, вилка, кашӑк пек вак-тӗвек япаласене ҫеҫ пухнӑ. Япаласем пухас тӗлӗшпе ВЛКСМ райкомӗ пионерсемпе шкул ачисем хушшинче ӗҫлекен яланлӑх комисси ҫине шаннӑ. Ку комисси кирлӗ пек ертсе пырайман. Ҫавӑнпа хӑшпӗр ҫӗрте пухӑннӑ япаласем те пуҫламӗш организацисенчех выртаҫҫӗ.

Ирӗке кӑларнӑ районсенчи ӗҫҫыннисене япаласем пухса ярса парса пулӑшас тӗлӗшпе комсомол организацисем лайӑхрах ӗҫлеме кирлӗ. Бюро ку ӗҫе комсомолецсене, союзра тӑман ҫамрӑксене, колхозниксене, шкул ачисене пурне те явӑҫтарма сӗнчӗ. Япаласене пухас тӗлӗшпе ятарласа комиссисем организацилемелле. Тӑхӑнмалли тата ытти пысӑкрах япаласене пухассине йӗркелемелле. Пухӑннӑ япаласене пуҫламӗш организацисенче выртарталла мар, вӗсене районри склада леҫмелле.

Ирӗке тухнӑ шкулсене—тӑванла пулӑшу

КАЛИНИНО. Мухтавлӑ Хӗрлӗ Ҫар нимӗҫ бандичӗсене кунран кун аркатса пырса, вуншар ялсене, хуласене ирӗке кӑларать. Горький хулинчи учительсемпе вӗренекенсем ирӗке тухнӑ совет районӗсенчи шкулсене учебниксемпе тата наглядлӑй пособисемпе пулӑшма чӗннине ответлесе, Калинински районри шкулсем те ҫак пархатарлӑ та хисеплӗ ӗҫе хутшӑнчӗҫ.

Паянхи кун тӗлне районӗпе 445 учебник, 66 илемлӗ литература кӗнеки, 2 географи атласӗ, карандашсем, ручкӑсем, пероcем тата ытти япаласем те чылай пухнӑ.

Ассакассинчи туллимар вӑтам шкулта вӗренекен пионерсем ку ӗҫе пысӑк хавасланхпа хутшӑнчӗҫ. Е. Васильев — 3 кӗнеке, Б. Боркин, В. Мальцев, И. Орлов, Л. Пантелеймонов, Д. Иванов, Л. Власов т. ыт. пионерсем те пӗрерикшер кӗнеке пачӗҫ. Ку шкулта паянхи куна ҫитсе 30 кӗнеке пухрӗҫ. Пуҫарнӑ ӗҫ саралсах пырать.

Ҫавӑн пекех Чӑрӑш Хирлепри туллимар вӑтам шкулта та 60 учебник, Алкаҫинри туллимар вӑтам шкулта 48 учебник пама пулчӗҫ. Ку ӗҫ ытти шкулсенче те анлӑн саралса пырать. Ирӗке тухнӑ шкулсене учебниксем тата наглядлӑй пособисем пухса ярса тӑванла пулӑшу парассишӗн кашни шкулах тӑрӑшать.

Б. ШОРНИКОВ.

Кӑҫса килнӗ ачасемшӗн тӑрӑшатпӑр

ҪӖРПУ. (Телефон тӑрӑх). Районри учительсем хушшинче фронт патӗнчен куҫса килнӗ ачасене япаласемпе пулӑшас ӗҫ вӑйланать. Ҫӗрпӳри профтехшкулра вӗрентекен учительсен коллективӗ куҫса килнӗ ачасене пулӑшма 10 костюм, 10 мӑшӑр носки, 2 мӑшӑр алсиш, 2 мӑшӑр ботинка, 1 мӑшӑр ҫӑматӑ, 3 майка тата ыт. те пухса пачӗ.

Чуратчӑкри вӑтам шкулти учительсен коллективӗ 2 мӑшӑр ҫӑматӑ, 6 тир тата ыт. те панӑ.

Совет ҫӗршывӗн тӑшманпа вӑхӑтлӑха йышӑнса илнӗ облаҫӗсемпе фронт ҫывӑхӗнчи районсенчен куҫса килнӗ ачасене пулӑшасси—пӗтӗм тылри халӑхӑн пархатарлӑ ӗҫӗ пулмалла. Ку ырӑ ӗҫе пурин те хутшӑнмалла.

Танксен колоннине тума укҫа параҫҫӗ

ҪӖМӖРЛЕ. («Чӑваш Коммуни» корр.). Районри учительсем, Куйбышев хулинчи 13-мӗш номерлӗ чугунҫул шкулӗнчи учительсен коллективӗ чӗнсе каланине ырласа, танксен «Народный учитель» ятлӑ колоннине тума укҫа пухас ӗҫе активлӑн хутшӑнчӗҫ. Хальхи вӑхӑтра укҫа пухас ӗҫ саралсах пырать.

Поянлайкинӗри туллимар вӑтам шкулти учительсем танксен колоннине тунӑ ҫӗре кашнинех икӗ кунхи ӗҫукҫинчен кая мар пама йышӑнчӗҫ. Учительница Улисова, шкул директорӗ Ногаев юлташсем пӗр эрнери ӗҫ укҫине пачӗҫ.

Чӑваш Улхашри туллимар вӑтам шкулти учительсем, пӗр кунхи ӗҫукҫине панисӗр пуҫне, иртнӗ воскресеньере ӗҫлесе илнӗ укҫана тата 1-300 тенкӗлӗх заем облигацийӗсем хывӗрӗҫ. Ортиков юлташ 18 тенкӗ укҫа, 400 тенкӗлӗх заем облигацийӗ, Филина юлташ—17 тенкӗ укҫа тата 300 тенкӗлӗх заем облигацийӗ пачӗ.

Ытти шкулсенчи учительсем те калӑх учителӗ ячӗпе танксен колоннине тума 1—3 кунхи ӗҫукҫине панӑ.

• • •

Ҫӗрпӳри педучилище коллективӗ икӗ хутчен чугунҫул ҫинче ӗҫлерӗ. Юр тултарнӑ вырӑнсене хырса тасатрӗ, юр тытмалли щитсене юр айӗнчен кӑларса ҫӗнӗ рете лартса тухрӗ. Ҫак ӗҫсемшӗн илмелли 500 тенкӗ укҫана халӑх учителӗ ячӗпе тӑракан танксен колоннине тума пачӗ. Кунсӑр пуҫне ҫав танксен колоннине тумах преподавательсемпе служащисем хӑйсен пӗр кунлӑх ӗҫ укҫине уйӑрса памалла турӗҫ.

Танксен колоннине тума Вӑрнаркассинчи вӑтам шкул учителӗсен коллективӗ 216 тенкӗ пачӗ. Ҫак коллективах воскресеньере илнӗ 230 тенкӗ укҫана та ҫав фондах панӑ.

П. ШООР.

Хаҫат витринисем пирки

Пирӗн халӑх ҫӗнӗ хыпарсене ҫийӗнчех пӗлесшӗн. Аннӑ отечественнӑй вӑрҫӑ фронтӗнчи ӗҫсем, тӑван ҫӗршыв пурнӑҫӗ, тӗнчере пулса пыракан событисем тата ыт. те питӗ интереслентереҫҫӗ. Пурин те, уйрӑмӑнах, Совет Информаци Бюровӗн сводкисене пӗлес килет. Анчах та ҫӗнӗ хыпарсене пӗлтерсе тӑма халӑх хушшинче часчасах хаҫатсем ҫителӗклӗ пулмаҫҫӗ. Ҫакна пула ҫӗнӗ хыпарсене масса хушшине ҫитерес ӗҫре чӑрмав тухса тӑрать. Ҫак чӑрмава пӗтерме кирлӗ майсем шыраса тупмалла. Ун пек майсенчен пӗри вӑл — халӑх пухӑнакан вырӑнсенче хаҫат витринисем организацилесси пулать.

Хаҫат витринисене предприятисенче, учрежденисенче, ялсовечӗсемпе колхоз правленийӗсем ҫумӗнче, промысла артелӗсенче, хула урамӗсенче, базар площачӗсенче, вокзалсенче тата ытти вырӑнсенче те организацилеме кирлӗ. Вӑл витринӑсем ҫине «Правда», «Известия», «Комсомольская правда» т. ыт. хаҫатсене тата, ялсенче пулсан, районра тухса тӑракан хаҫатсене те ҫакса хумалла. Ку хаҫатсене пурте вулама пултарччӑр. Паллах, витринӑри хаҫатсене кивелсе ҫитиччен тытмалла мар, вӗсене яланах ҫӗнӗрен ҫӗнӗ номерсемпе улӑштарса тӑмалла. Почта ҫӗнӗ хаҫат ҫитерсен, ӑна ҫав сехетрех витринӑна ҫакмалла. Витринӑри хаҫатсене йӗркеллӗн улӑштарса тӑнине тата вӑл витринӑсене юсавлӑн тытнине асӑрхаса тӑма ответлӑ ҫынсем уйӑрмалла.

Витринӑна тӑвасси хакла лармасть, ӑна тума материал та нумай кирлӗ мар. Кунта пӗр ӗҫе пуҫарни, тимлени, ӗҫе ҫине тӑрса туни кӑна кирлӗ.

Пирӗн республикӑри хуласенчен хӑш-пӗринче, уйрӑмӑнах Шупашкарта, витринӑсем организацилени чылай пулать ӗнтӗ. Анчах та кусем ҫителӗклӗ мар-ха, вӗсене ытларах тумалла. Тепӗр енчен тата хӗллехи уйӑхсенче кунти витринӑсенчи хаҫатсене йӗркеллӗн улӑштарса тӑманни курӑнчӗ. Тивӗҫлӗ учрежденисем ку ҫитменлӗхсене малашне пӗтерме пулчӗҫ. Ҫавӑнпа та Шупашкарти хаҫат витринисене малалла йӗркеллӗн тытса тӑрассине шанма пулать.

Юлашки вӑхӑтра эпир хаҫат витринисене республикӑн хӑшпӗр районӗсенче те организацилениине куратпӑр. Ку тӗлӗшпе Етӗрне районӗ малта тӑрать. Унта районӗпе пурӗ 21 хаҫат витрини организациленӗ. Йӗпреҫ районӗнче 5 витрина тунӑ тата 8 витрина тума заказ панӑ. Хальхи вӑхӑтра ҫавӑн пек витринӑсене парти райкомӗ умӗнче, райком агитпунктӗнче тата станцире йӗркеллӗн тытса тӑраҫҫӗ. Вӑрмарпа Шӑмӑршӑ районӗсенче 12-шер витрина тунӑ. Анчах кунта кӑтартнӑ районсем ку лайӑх ӗҫе тин ҫеҫ пуҫласа янӑ-ха. Вӗсен витринӑсене нумайлатмалла. Витринӑсем кашни ялтах пулмалла.

Етӗрне, Вӑрмар, Шӑмӑршӑ, Йӗпреҫ районӗсем пуҫласа янӑ ӗҫе ытти районсен те халех йышӑнса ӑна пурнӑҫа кӗртмелле.

Районсенчи хаҫат витринисене асӑрхаса тӑрасси парти райкомӗсен агитаципе пропаганда отделӗн ответлӑ ӗҫӗ пулать. Ҫавӑнпа та вӗсен ку ӗҫе халех, ҫине тӑрсах тытӑнмалла.

Нимӗҫ захватчикӗсен тылӗнче лӑпкӑ мар

СТОКГОЛЬМ, мартӑн 13-мӗш. (ТАСС). Нимӗҫсен фашистла оккупанчӗсен тата квислинговецсен Норвегири положенийӗ ытларах та ытларах йывӑрланса пырать. Гитлеровецсен террорӗ, вӗсем пусмӑрлани тата выҫлӑх Норвеги халӑхӗн тарӑхӑвне вӑйлатса пыраҫҫӗ.

Швецири «Ди Вельт» журнал: Норвеги пӗтӗмӗшпех выҫӑхса ҫитес хӑрушлӑх умӗнче тӑрать, тесе ҫырать. Ҫу таврашне пачах та сутмаҫҫӗ. Пулӑ ҫитмест, мӗншӗн тесен ӑна пӗтӗмпе пекех нимӗҫсем илсе кайнӑ. Германие ямашкӑн консервӑсем тӑвас тӗлӗшпе ятарласах консерва завочӗсем ӗҫлеҫҫӗ. Ослӑра тата ытти хуласенче нимӗҫсем валли ятарласа бакалея магазинӗсем уҫнӑ. Халӑха вара чи кирлӗ продуктсене те памаҫҫӗ. Селедкӑпа маргарина та пулин сутмаҫҫӗ, вӗсен запасӗсене пӗтӗмпех Германие янӑ. Норвегири ача-пӑчасем нумай вӑхӑт хушши ӗнтӗ пӗр грамм ҫу та, сӗт те, ҫӑмарта та илеймеҫҫӗ. Шурӑ ҫӑнӑхха пит аптӑраса ҫитсен ҫеҫ врачсен рецепчӗсем тӑрӑх параҫҫӗ.

Ҫурҫӗр Норвегири халӑх та ҫавӑн пек положениех кӗрсе ӳкнӗ. Кӑнтӑр Норвегире те положени унтан лайӑххах мар. Норвегири «Афтенпостен» хаҫат пӗлтернӗ тӑрӑх, пур ҫӗрте те продуктсемпе спекуляци тӑвасси вӑйланса пырать. Ослӑри «хура биржӑра» таварилекенсем квислинговецсем пулса тӑраҫҫӗ, вӗсем вара хӑйсем елхасна вӑхӑтра чылай пуйма ӗлкӗрчӗҫ.

Норвегире нимӗҫсен оккупациллӗ ҫарӗ валли каллех продовольствисем туртса илсе пухма тытӑннӑ. Кунта Квислинг цветной металсенчен тунӑ япаласене «нимӗҫ войскисен кушшисем валли» туртса илесси ҫинчен распоряжени кӑларнӑ. Конторӑсенче, театрсенче тата уйрӑм ҫынсен ҫурчӗсенче алӑксен пӑхӑртан тунӑ хӑлӑпӗсене, тимӗртен тунӑ ытти хатӗрсене те турта-турта илеҫҫӗ.

Норвеги халӑхӗн пур сийӗсем те гитлеровецсем ҫине ытларах та ытларах тарӑхса пыраҫҫӗ. Гитлерла «ҫӗнӗ йӗркене» хирӗҫ кӗрешес кӑмӑл ӳссе, ҫӗкленсе пырать.

ВЕНГРИ ПРАВИТЕЛЬСТВИН КРИЗИСӖ ҪИНЧЕН

ЖЕНЕВА, мартӑн 13-мӗш. (ТАСС). Журналистсем хушшинче ҫапла пӗлтереҫҫӗ: Бардоши отставкӑна тухас умӗн Венгри правительствипе ҫар командованийӗн пӗрлешӳллӗ тӑвӑллӑ ларӑвӗ пулса иртнӗ.

Ҫар министрӗ Барта, Совет Союзӗпе Германи хушшинчи вӑрҫӑ фронтне яма кавалерин ҫӗнӗ соединенийӗсене пухса йӗркелес ӗҫ мӗнле пыни ҫинчен доклад тунӑскер, ҫар влаҫӗсен «ҫӗнтерме ҫук йывӑрлӑхсене» тӗл пулма лекет, тесе пӗлтернӗ. Чылай комитатсенче, тенӗ Барта, пӑлханусем пулнӑ, ҫӗнӗ мобилизаципе тата халӗ тӑвакан кавалери чаҫӗсем валли лашасене массӑллӑн туртса илнипе кӑмӑлсӑр пулнӑ хресченсем пӑлханнӑ. Министр каланӑ тӑрӑх, граждӑнла влаҫсем, тӗслӗхрен Барчан хулин губернаторӗ, ҫар влаҫӗсен мероприятийӗсене хирӗҫ тӑраҫҫӗ.

Фронт валли лашасене массӑллӑн мобилизацилениине тата туртса илнине пула, ҫураки ӗҫӗсем арканса кайма пултарасси пирки те ларура шиклениe калаҫнӑ.

ГЕРМАНИПЕ ИТАЛИЯ ГРЕЦИРЕ ВӐРҪА ХАТӖРЛЕНЕҪҪӖ

ЛОНДОН, мартӑн 11-мӗш. (ТАСС). Рейтер агентствин Анкарари корреспонденчӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, Анкарара ҫакӑ паллӑ пулса тӑнӑ: юлашки уйӑх хушшинче Белград—Ниш чугунҫулӗ тӑрӑх Салоникки еннелле артиллери орудийӗсем тата ҫар снаряженийӗ нумай янӑ. Салоникирен пӗлтернӗ тӑрӑх (ку хыпарсене тӗрӗслемен-ха), нимӗҫсемпе итальянецсем хӑйсен ҫарӗсене Грецин утравӗсем ҫинче, пуринчен ытла Лемнос, Самос, Лесбос утравӗсем ҫинче пухать тата вӑрҫа савсем ҫинче хатӗрленет. Грексем Германин ӗҫӗсене мӗн май килнӗ таран саботаж туса пыраҫҫӗ. Нумай пулмасть Салоники—Свиленград чугунҫулӗ пӑсӑлсан, 300 грека персе вӗлернӗ. Корреспондент тата ҫапла хушса хурать: нимӗҫсем вӑрҫӑ ӗҫӗсем валли Афины—Салоники чугунҫулне уйӑрса хунӑ, тет.

Стамбулра гитлеровецсен клубӗнче ухтарнӑ

НЬЮ-ЙОРК, мартӑн 10-мӗш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин Стамбулри корреспонденчӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, нейтральнӑй ҫынсем ҫапла каласа параҫҫӗ: Турцин полицийӗ мартӑн 9-мӗшӗнче Стамбулра Германи клубне кӗтмен ҫӗртен пырса ухтарнӑ, ҫапла туса вӑл фон Папена вӗлерме тӑнине уҫӑмлӑрах палӑртакан материалсем тупасшӑн пулнӑ пулмалла.

Голланди премьер-министрӗ радио тӑрӑх тухса калани

ЛОНДОН, мартӑн 12-мӗш. (ТАСС). Голланди правительствин премьер-министрӗ Гербранди, ҫак кунсенче радио тӑрӑх тухса каласа, хӑйӗн ҫӗршывӗн ҫыннисене Голланди халӑхӗн кӗрешӗвӗ малалла та пырасси ҫинчен шантарнӑ. «1943 ҫулта,—тенӗ вӑл,—хамӑрӑн вӑйсене тинӗс ҫинче те, сывлӑшра та тӑшмансеннинчен ирттерсе, эпир союзниксемпе пӗрле татах та анлӑнрах наступлени пуҫласа ярӑпӑр». Гербранди каланӑ тӑрӑх, Ява утравне аталанӑ Япони флотӗнче ҫӗр карап ытла шутланнӑ, подводнӑй лодкӑсен хӳттипе войско турттаракан Японри транспорчӗсене хирӗҫ ҫапӑҫнӑ чух голландецсен паранмалла пулнӑ. «Тин ҫӗрте хамӑртан тӑватӑ хут вӑйлӑрах, сывлӑшра вунӑ хут вӑйлӑрах противникӑн вӑйӗсене хирӗҫ ҫапӑҫни шанчӑксӑр ҫапӑҫу пулчӗ. Анчах ҫапӑҫу пирӗн мӗншур архипелаг утравӗсене ҫавӑрса илчӗ пулин те, ку кӗрешӳ чарӑнмасть-ха; ҫак кӗрешӳ ӳссе пыни пирӗншӗн усӑллӑрах пулӗ», тенӗ Гербранди.

Явӑшӑн ҫапӑҫнин итогӗсем ҫинчен

ЛОНДОН, мартӑн 9-мӗш. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчӗ Аделаидӑран пӗлтернӗ тӑрӑх, Австралие Голланди Индийӗн генерал-губернатор заместителӗ Ван Моок пынӑ, унпа пӗрле Голланди Индийӗн сывлӑш-ҫар вӑйӗсен штабӗн начальникӗ, нациллӗ советӑн членӗсем тата ытти чылай руководительсем пынӑ.

Пичетӗн представителӗпе калаҫса Ван Моок ҫапла каланӑ: «Эпир кунта малалла та кӗрешмешкӗн вӑй мӗнчухлӗ пухма пур таранах пухма килтӗмӗр», тенӗ.

Ашет агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Голланди Индийӗнче союзниксен Малайӑри тата Сингапурти ӗҫӗсем пирки тишкерсе калаҫаҫҫӗ. Агентство ҫакна кӑтартса парать: Япония Америкӑпа Англие хирӗҫ вӑрҫӑ пуҫласан, Голланди Индийӗ хӑйӗн сывлӑшри тата тинӗсри вӑйӗсене, вӗсем час пӗтме пултарассине пӗлсех, вӑрҫа кӗртсе ячӗ. Ява ҫинче союзниксен командованийе тунӑ—Малайӑпа Сингапур паранас пулсан, союзниксем Ява ҫинчен контрнаступлени тумашкӑн Явӑна база туса хурас тӗлӗшпе мӗн тумаллине пурне те тӑвӗҫ, тесе шанма май панӑччӗ. Тулашри провинцисем пӗрин хыҫҫӑн тепӗри ҫухалсан, февральте Ява ҫине ҫителӗклӗ подкреплени килес шанчӑк, ҫапла вара утрава алӑра тытса тӑрас, каярахпа пуҫарулӑха хамӑр алла илес шанчӑк юлнӑччӗ. Анчах та ҫав подкрепленисем вӑхӑтра пырса ҫитмерӗҫ. Союзниксен Ява ҫинчи войскисем, вӗсем Голландипе Индонези салтакӗсемпе пӗрле тӑрса паттӑррӑн ҫапӑҫнӑ пулин те, утрава хӑйсен аллинче тытса тӑма нумай ҫителӗксӗр пулчӗҫ. Голланди флочӗ юлашки май толмиччченех ҫапӑҫрӗ. Анчах та килмелли подкрепленисенчен Америкӑн бомбардировщикӗсем кӑна килсе ҫитрӗҫ. Вӗсем кӑрушӑ хӗҫпӑшал пулса тӑчӗҫ пулин те, вӗсен пахалӑхӗ сывлӑшри бомбардировщиксене тата аэродромсене сыхламалӑкӑн истребительсем ҫитменнипе чакрӗ.

Англи авиацийӗ Киль ҫине вӗҫсе пырса тапӑнни

ЛОНДОН, мартӑн 13-мӗш. (ТАСС). Англири авиаци министерстви кӑларнӑ коммюникере ҫапла каланӑ: мартӑн 13-мӗши ыран тенӗ чух ҫӗрле Англин бомбардировщикӗсем Киль ҫине тата Сурҫӗр-Хӗвеланӑҫ Германири ытти объектсем ҫине вӗҫсе пырса тапӑннӑ. Суднӑсем тӑвакан верфьсем ҫине пӑрахнӑ бомбӑсем ҫурӑлнине палӑртнӑ, верфьсенче чылай тӗлте пушар тухнӑ. Тӑшман хыҫӗсене минӑсем пӑрахнӑ. 8 бомбардировщик хӑйсен базине тавӑрӑнман.

Германин „Шангорст“ линкорӗн сиенӗсем

ЛОНДОН, мартӑн 13-мӗш. (ТАСС). Англин самолечӗсем тунӑ аэрофотоӳкерчӗкрен ҫакӑ курӑнать: Германин «Шангорст» линкорӗ юр тӳлтарнӑ докра тӑрать. Карапӑн малти пайне юртан тасатнӑ, ҫавна пула фотографи ҫинче бомба ӳксе шӑтарнӑ пысӑк шӑтӑк курӑнать. Карапӑн малти пайӗпе малти оруди башни хушшинчи витӗнчӗке сирсе пӑрахнӑ. Ку ӗнтӗ лекнӗ бомба сахалтан та пӗр палубине шӑтарса тухнӑ, тен, батарея патнех ҫитнӗ тесе май парать. Уксерчӗксем Германин ҫар карапӗсене вирҫӗшне те, Англи авиацийӗ ҫӗмӗрнӗскерсене, ытла хӑрушах мар условисенче юсаса тӳрлетес тесе Брестран илсе тухни ҫинчен пӗлтереҫҫӗ.

Англи правительстви Инди тӗлӗшпе официальнӑй йӗркепе тунӑ заявлени

ЛОНДОН, мартӑн 11-мӗш. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Лондонра Инди тӗлӗшпе ҫакӑн пек официальнӑй заявлени пичетленӗ:

«Япония малалла куҫса пынӑ пирки Инди ытти тӗлӗшпе тухса тӑнӑ кризис Инди ҫӗршывне талӑкса кӗрессинчен сыхламашкӑн Индири мӗншур вӑйсене пӗрлештерме тӑрӑшма хушать. 1940 ҫулти август уйӑхӗнче эпир Инди тӗлӗшпе мӗнле тӗллевсем тата мӗнле политика тытса пыни ҫинчен тӗплӗн каласа пӗлтернӗччӗ. Кӗскен каласан, ҫапла туме сӑмах панӑччӗ: вӑрҫӑ пӗтсен май килнӗ таран кӗскерех срокра Индия доминион статутне туянать, ӑна доминионсем усӑ куракан тулли ирӗклӗх тата ыттисемпе пӗртан правӑсем параҫҫӗ, ҫаксене ӑна Инди ҫыннисем ҫырса хатӗрлемелли конституци тӑрӑх параҫҫӗ. Паллах ӗнтӗ, ҫакӑ вӑл йышсӑртарах нацисене, ҫав шутрах тата пусмӑр айӗнче пурӑнакан ушкӑнсене те, сыхлас тӗлӗшпе хамӑр ҫине илнӗ обязательствӑсене пурнӑҫлассинчен тата эпир Индипе куҫҫулӗпе нумай вӑхӑт хушши ҫыхӑнса тӑнинчен тухса тӑракан хӑшпӗр пӗчӗкрех ыйтусене йӗркелесе янинчен килсе тӑрать.

Ҫак пӗтӗмӗшле каланӑ сӑмахсене тӗплӗрех те тӗрӗсрех калас тесе тата Индири мӗншур классене, расӑсене тата вероисповеданисене эпир чӑнах та чунтан-чӗререн кӑмӑллама тӑрӑшнине ӗнентерес тесе, военнӑй кабинет халӗ тата малашне тумалли ӗҫсем тӗлӗшпе пӗр шухӑшлӑн килӗшрӗ; ҫав ӗҫсем, вӗсене пӗтӗм Индия йышӑнсассӑн, Индири сахалрахӑшӗ хирӗҫ тӑрас хӑрушлӑха сирсе ямалла, нумайрахӑшӗн решенийӗсене хирӗҫ тӑрассине сирсе яма май памалла. Эпир Индие тулли самоуправлени илес ӗҫре пулӑшассин условийӗсене халех ҫырса хатӗрлеме пултӑмӑр. Анчах эпир хальхи пек самантра усӑҫӑн каласа пани ӗҫе пулӑшас вырӑнне ӑна сиенлеме пултарассине пӗлсе тӑратпӑр. Пирӗн малтан ҫак плана Индире ҫителӗклӗ таран ырлассине, ҫапла майпа пирӗн план Индири пӗтӗм шухӑшпа пӗтӗм вӑя тӑван ҫӗршыва сыхлас ӗҫ тавра пӗтӗҫтерме пулӑшассине курса ӗненмелле. Тӑшман Инди хапхи умӗнче тӑнӑ вӑхӑтра Инди халӑхӗн пайӗсем йышӑнмасӑр хӑварма пултаракан тата конституци тӗлӗшпе хирӗҫтерсе яма пултаракан заявлени туса эпир пӗтӗмӗшле ӗҫе начар пулӑшу панӑ пулӑттӑмӑр.

Ҫакна шута илсе, эпир военнӑй кабинетӑн пӗр членне Индие яма шутлатпӑр; вӑл, ҫынсемпе куҫа-куҫӑн калаҫса, эпир тунӑ выводсем, эпир тӗрӗс тата татӑклӑ тесе шутлакан выводсем хӑйсен тӗллевне пурнӑҫлассине пӗлмелле. Пичетӗн лорд-хранителӗ, общинӑсен палатин лидерӗ Стаффорд Криппс ҫак задачӑна хӑй ҫине илме килӗшрӗ. Ӑна Англи правительстви тулли шанса ярать, вӑл правительство ячӗпе калаҫса Индири нумайрахӑш кӑна мар, тӗрлӗ йышсӑртарах ушкӑнсем те ҫителӗклӗ таран килӗшчӗр тесе тӑрӑшӗ, ҫак йышсӑртарах ушкӑнсем хушшинче чи йышлӑраххи — мусульмансем, вӗсем ҫӗршывӑн нумай ӗҫӗсенче питӗ пысӑк вырӑн йышӑнса тӑраҫҫӗ. Ҫав вӑхӑтрах пичетӗн лорд-хранителӗ Индин вице-королӗпе тата хӗҫпӑшаллӑ вӑйсен командующийӗпе вӑрҫӑллӑ лару-тӑру ыйтӑвӗсем ҫинчен канашлӗ, анчах вӑл Англи правительствин, хӑй аллинчи мӗншур майсемпе Инди халӑхӗсене вӗсене халь хӑратса тӑракан хӑрушлӑхсенчен хӑтарма тӑрӑшаканскерӗн, ответлӑхӗ ҫинчен те манмӗ».

Рузвельт Инди представительне йышӑнни

НЬЮ-ЙОРК, мартӑн 13-мӗш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви Вашингтонран пӗлтернӗ тӑрӑх, Индин Вашингтонри генеральнӑй агенчӗ Баджпаи малтанхи хут Рузвельт патӗнче пулнӑ. Президентпа калаҫнӑ хыҫҫӑн Баджпаи пичет представителӗсене ҫакӑн пек каланӑ: Индия пӗтӗм чунтан Пӗрлешӳллӗ Штатсемпе пӗрле ӗҫлесшӗн, тенӗ. Баджпаи: Криппсӑн Индири миссийӗ ӑнӑҫлӑ пулассa шанатӑп, тесе пӗлтернӗ.

Японецсем Бразилин Токиори посольствин ҫуртне йышӑннӑ

НЬЮ-ЙОРК, мартӑн 11-мӗш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Бразилин ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министрӗ ҫапла каласа панӑ: японецсем Бразилин Токиори посольствин ҫуртне йышӑнса илнӗ. Посольствӑн ҫыннисене пӗр ҫыхӑнусӑр тӑратса хӑварнӑ. Японецсем вӗсене тыткӑнри ҫынсене тыткаланӑ пек тыткалаҫҫӗ. Ҫавӑнпа Бразилия та Японин посолӗпе Японин посольствин ҫыннисем тӗлӗшпе те ҫавӑн пек мерӑсемех йышӑннӑ.

Ютҫӗршывсенче

● Англи промышленноҫӗн тӗрлӗ отраслӗсенче ӗҫлекен хӗрарӑмсен шучӗ халӗ вӑрҫӑчченхинчен 1,5 миллион ҫын ытларах ӳснӗ. Ҫак цифра уйӑхсерен 150 пин ҫын таран ӳссе пырать.

● Болгарире Дунай шывӗ питех те вӑйлӑн хӑпарса пырать, пысӑк сиенсем пуласси хӑратать. Видин портӗнче Дунай шывӗ хӑйпӗр вырӑнсенче пӳрт ҫийӗсене илнӗ. Вырӑнти халӑх 2.000 ҫын ҫил-ҫуртсӑр тӑрса юлнӑ.

● Канна хулинче Греци государствин ютҫӗршыв ӗҫӗсен министрӗ пулнӑ Политас вилнӗ.

Совет Союзӗ тӑрӑх

Связистсем юлташла пулӑшни

Ярославль облаҫӗнчи тата Рыбинскри связистсем, ӗҫ хыҫҫӑн ӗҫлеме юлса, нимӗҫ оккупанчӗсенчен ирӗке кӑларнӑ Тула облаҫӗнчи районсене ама телефон аппарачӗсем, проводсем тата 160 хула валли станци хатӗрленӗ.

Ҫӗнӗ специалистсем

Чугунҫул транспорчӗн Харьковри институчӗ, Узбекистана куҫса кайнӑскер, 240 студент вӗрентсе кӑларчӗ. Ҫамрӑк специалистсене ӗнтӗ практикӑна янӑ.

Дегестанра ҫуркуннехи пулӑ тытас ӗҫ пуҫланнӑ

Дагестанра ҫуркуннехи пулӑ тытас ӗҫ пуҫланнӑ. Пулӑ завочӗсем колхозниксенчен пулӑпа малтанхи пин центнерне йышӑннӑ.

Уфара пулса иртнӗ научнӑй конференци

Уфара Мускаври пӗррӗмӗш медицина институчӗн научнӑй конференцийӗ пулса иртрӗ. Червяков, Ландберг, Гуревич тата ытти юлташсем сурансене пула пулакан чирсем ҫинчен тата ҫав чирсенчен хӑтармалли мелсем ҫинчен докладсем туса пачӗҫ. Конференци ӗҫне УССР академикӗсем хутшӑнса ӗҫлерӗҫ. (ТАСС).

Чӑваш боецӗсен хор кружокӗ

Чӑваш республикинчен килнӗ Н-ски чаҫри боецсем 16 ҫынран хор кружокӗ организацилерӗҫ. Нумаях пулмасть чӑвашсен хор кружокӗ Тимофеев юлташ ертсе пынипе Н-ски чаҫри боецсен пултарулӑх каҫӗнче чӑвашсен «Кайӑккай Ивана», «Вӑрман витӗр», «Ан авӑн тӗпшӗ...», «Линка-линка» юррисене юрласа парса пӗррӗмӗш вырӑна йышӑнчӗ. Пултарулӑх каҫӗн комиссийӗ йышӑннӑ тӑрӑх, чӑваш хор кружокне Н. хулинчи гарнизон смотрне ямалла тунӑ.

К. ЭНЗЕР.

Ҫӗнӗ кӗнекесем

Чӑвашсен Государство Издательстви юлашки вӑхӑтра аялта кӑтартнӑ кӗнекесене пичетлесе кӑларчӗ:

Паттӑрсем. Чӑвашгосиздат, 1941 ҫул, 64 стр., тиражӗ 3000 экз., хакӗ 1 тенкӗ.

Урса кайнӑ нимӗҫ фашизмне хирӗҫ пыракан отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ куллене ҫӗнӗ геройсем ҫуратса пырать. Ҫав геройсем хушшинче чӑваш халӑхӗн паттӑр ывӑлӗсем те нумай. Вӗсем пурте пӗр ӗмӗтпе, пӗр тӗллевпе — иртӗхсе кайнӑ фашистсене хӑвӑртрах ҫӗмӗрсе тӑкас ӗмӗтпе хӑйсене шеллемесӗр ҫапӑҫаҫҫӗ. Вӗсем ҫинчен хаҫатсемпе журналсенче вырӑсла та, чӑвашла та очерксемпе калавсем пичетленнӗ. Кӗнекене ҫавӑн пек очерксемпе калавсене пухса кӗртнӗ. Кӗнекене вулакансем отечественнӑй вӑрҫӑра чӑваш халӑхӗн паттӑррӑн ҫапӑҫакан ывӑлӗсен ӗҫӗсемпе паллашаҫҫӗ.

С. В. Элкер. Ирӗклӗх юррисем. Чӑвашгосиздат. 1941 ҫул, 204 стр., тираж 3000 экз., хакӗ 2. т. 75 п.

Асӑннӑ кӗнекене чӑваш халӑх поэчӗн—Семен Васильевич Элкерӗн 20 ҫул хушшинче ҫырнӑ чи лайӑх сӑввисемпе поэмисене суйласа кӗртнӗ. Кӗнекене пурӗ тӑватӑ пая уйӑрнӑ: 1) Октябрь саманн, 2) Вӑрҫӑ хирӗсенче, 3) Лирика, 4) Тӗрлӗрен. Сборника поэтӑн халиччен пиҫта та пичетленмен сӑввисемпе поэмисем те кӗнӗ.

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

КИНО-ТЕАТР
14 и 15 МАРТА
КОНЦЕРТЫ
В АНТРАКТАХ И ПО ОКОНЧАНИИ
ТАНЦЫ
Играет духовой оркестр.
Начало в 23 часа.
Касса с 14 часов в кино-театре.

Чебоксарскому кож-комбинату им. Водопьянова
требуются на постоянную работу:
о б у в щ и к и,
кожевники и ученики.
Обращаться в отдел кадров комбината, ул. Ворошилова, 27.
2—2

ЛАША шыратпӑр,
лашан тӗсӗ хурарах тимӗр-кӑвак, 1939 ҫулта ҫуралнӑ, ҫамрӑк ӑйӑр, кастарман, ытла пысӑках мар.
Тупса пире пӗлтерекене укҫан е тыррӑн тӳлетпӗр.
Пирӗн адрес: Чӑваш АССР, Вӑрнар районӗ, Кӑмаш ялсовечӗ, Сталин ячӗпе тӑракан колхоз правленийӗ.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, редакци секретарӗн—4—26, пропагандӑпа парти пурнӑҫ пайӗн — 5—31, ялхуҫалӑх пайӗн — 3—99, «Ленин ҫулӗпе» журналӑн тата комсомол пурнӑҫ пайӗн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 1009 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 6, 58 64 [illegible]